# Сунтал



# ШУРНАЛТА ПУРРИ:


| | Стр. |
|---|---|
| 1. XIV-мĕш конферентси мĕн каларĕ (статйа) | 1 |
| 2. **Тукташ**—сăвăсем | 2 |
| 3. **Касакков К. Н.**—Ђăваш респуплĕкĕнђе натси политтĕкĕ пурнăçа мĕнле кĕрсе пырат (статйа) | 3 |
| 4. **Н. Шупуççынни**—Теçерттир | 6 |
| 5. **Есрел**—сăвăсем | 10 |
| 6. Атăл çинђе (сăвă) | 11 |
| 7. Йалпа хула сотсиалисăмла ăмăртура (фотто-ӳкерђĕксем) | 12 |
| 8. Ленин сотсиалисăмла ăмăрту çинђен мĕн каласа хăварнă | 13 |
| 9. **Уйăп Мишши**—Сулă çинђи йурă (сăвă) | 11 |
| 10. **Йанкас Н.**—Тăван уй-хир тăрăх | 15 |
| 11. **И. Папељ**—Толкушшов вилĕмĕ (**Ф. Ишетер** куçарнă) | — |
| 12. **Ç. Макçимăв**—Ђăваш хорĕ Мускавпа Ђулхулара | 18 |
| 13. **Н. Пиктемир**—Хир сасси (сăвă) | 20 |
| 14. **В. Паймен**—Ђăваш проси çинђен (статйа) | 21 |
| 15. **А. Милли**—„Çĕнĕ криттĕк“ (криттĕкка статйи) | 22 |


## КОНСУЉТАТСИ ПӲРОВĔ

**Ф. Ваççилйĕв—Кералкайа.** Сăвă технĕккипе паллашса çитме пуçланă. Анђах ăнланмалла çырмастăн. Сăвă сăнлăхĕ те нађар. „183“ сăввунта:

Вĕсенĕн пĕрремĕш ман тусăм,
Пĕлетĕп ун çамрăк халне.
Кăçаллăн вăл турĕ пĕр тусăм,
Сулларĕ хавассăн алне“ Кам вăл? Мĕн вăл

183-рен пĕрремĕшĕ? Мĕн çинђен каласшăн ес? Вулаканшăн сăввуна вуласа тухсан та паллă мар. Малалла урăх шухăшсем кайаççĕ. 183-рен пĕрремĕшĕ паллă мар. Ăнланмалларах çырма вĕрен. Шанђăк пур.

**И. Ваççилйĕва**. Сăввусенђе вырăсла сăмахсем ђылай кӳртетĕн. Мĕнле вăл ђăвашла-вырăсла сăвă? Ђипертерех сăввусемех ун пирки пăсăлаççĕ. Хăш-пĕр сăввусем сăмахсене ђăсса кайни çех. Хăшĕн сотершанийĕ пур та, сăнлăх, технĕккă çук.

„Ех, уш, ех савăнар,
Ех, уш харăссăн утар,
Комсомол!...
Малти йĕркепе
—марш!
Епир—ђулланнă,
Епир вĕт хурçă,
Ленин—
партти—
Калани саккун.
Ĕçе тăсатпăр!“

Мĕлле ĕçе тăсатпăр? Партти ĕçе тăсса пырат-и вара сан шутпа? Шухăшларах çырас пулат. Хутăн пĕр йенне çех çырмалла. Мĕскер тата ес: „Ђĕрем çине йунпах тĕрлерĕм“ текелетĕн? Мĕне пĕлтерет вăл?

## РЕТАКСИНЕ КИЛНĔ ÇЫРУ

### „Пролеттари Мусине“ пирки.

„Сунталăн“ кăçалхи 5-мĕш №-ĕнђе, Ил. С-нăв, ЂПП „Канаш“ сойусĕн Хусанти çекси кăларнă „Утăм“ аљманахĕн 2-мĕш №-не криттĕклесе тухрĕ. Хушăран еп çырнă „Пролеттари Мусине“ сăвва криттĕклесе Ил. С-нăв çырат:

«Ăнланма (сăвва К.) йăвăр...» тип-сăмахсем килĕшмеççĕ. Ку айăп тĕлĕшĕпе, мана, хамăнсăр пуçне никам та тӳрре кăтартма пултараймаст, мĕншĕн тесен хăш-пĕр вырăнта сăмахсем пиђетленнĕ ђух еп çырни пек пиђетленмен.

«Утăм»ра, автăр примершăн илнĕ вырăнсем, ђăнах та, вăл çырнă пекех пиђетленнĕ:

Ес тухрăп вут вартан, ĕçхалăхпе, çунса
Çак çĕнĕ **алттарта кĕсме парти** кӳмешкĕн.
Кӳр! Сап турру—мĕлйун! Çĕнĕлĕхе савса
Хаљ **тарават ĕнтĕ** ăна ес ђӳклемешкĕн.

Ман орикиналта çапла пулнă:

...Çак çĕнĕ **алттаре кĕрсе парне** кӳмешкĕн...
...Хаљ **ĕнтĕ тарават** ăна ес ђӳклемешкĕн.

Вăл кăтартнă тепĕр вырăнта та йăнăш çапăннă:

„**Çĕнтернĕ**“ сăмах вырăнне „**ĕнернĕ**“ пулнă:
Ак лира!—хур курман—ĕлĕкхи пек йанравлă,
Çĕн кĕвĕпеç ăна **ĕнернĕ** пролеттар“...

Ытти вырăнсене автăр кăтартман—тиркемест пулĕ. Сăвва вăл ăнланнă. Тата: пролеттари поеçине „ĕлĕкхи пек“ йанравлă тени, вăл ревољутсиђђенхи поеçи пекех илтĕнет тенине мар, ырлăх йенђен ревољутсиђђенхи поеçинђен кайа мар тенине пĕлтерет. Поеçин йађĕ çех йулнă, ытти пурте: поеçи satађĕ, ăшђикки, тулашĕ пурте улшăннă; кăна хаљ пурте лайăх астăватпăр.

**Кели.**

## ЛИТТЕРАТТӲРĂ ХРОНĔККИ

### Тутар писаттĕлĕсен екскурççийĕ.

Авкустăн 10-мĕшĕнђе Хусантан тутар писаттĕлĕсем 18 çын вак халăхсен çĕршывĕсенђе çӳреме 40 кунлăха екскурççине карĕç. Малтан вĕсем Атăл тăрăх анаталли хуласенђе пулаççĕ, кайран Каçпи тинĕспе кайса Кавкасран, Крымран çаврăнса Мускавпа Ђулхуларан Хусана килмелле.

Пристăнђре мана, тутар пролеттари писаттĕлĕ Кави Наçми: Уçпекистана та ђĕнеççĕ те, кăçал вăл йеннелле каймастпăр, килес çул ђăваш писаттĕлĕсемпе тата кӳршĕри ытти вак халăхсен писаттĕлĕсемпе пĕрле кайас пулат,—терĕ.

Хĕрарăмсенђен екскурçси шутĕнђе пĕр çын та çук. Кави Наçми арăмĕ çех, хăй шутĕнђен тăкак тытса екскурçси пĕтиђђенех йерсе çӳреме пулђĕ.

Екскурçси шутĕнђе «Красная Татария» хаçатăн ответлă ретактăрĕ Рупинштейн та пур. Вăл 8 сехетрен кайран тепĕр прахутпа ларса, малти пĕр хулара екскурççипе пĕрлешмелле терĕç.

**Шелепи.**

*УЛТТӐМӖШ ҪУЛ ТУХАТ.*

**Пӗтӗм тӗнҫери пролеттарисем, пӗрлешӗр!**

№ 8 (62)
АВКУСТ, 1929

# СУНТАЛ

Ђӑваш пролеттари писсаттӗлӗсен КАНАШ сойусӗн литтературӑ, криттӗк, политтӗк тата наукка шурналӗ

ХАКӖ: 1 уйӑха—20 пус. 3 уйӑха—60 пус. 6 уйӑха—1 тенкӗ те 10 пус, 1 ҫула—2 тенкӗ.

РЕТАКСИ АТРӖСӖ: гор. Чебоксары, Канашская улица, дом № 15, телефон № 47.

# XIV-мӗш КОНФЕРЕНТСИ МӖН КАЛАРӖ.

Авкустӑн 4-мӗшӗнђе Комуниссен парттин Ђӑваш республӗкӗнђи орканисатсийӗн 14-мӗш конферентсийӗ хӑйӗн ӗҫӗсене пӗтерсе хупӑнђӗ.

14-мӗш конферентси пит пысӑк ӗҫсем туса хӑварђӗ. Хуҫалӑх тӗлӗшпе пилӗк ҫуллӑх план пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине пӑхса тухрӗ, Ђӑваш орканисатсийӗн 13-мӗш конферентсийӗ кӑтартса хӑварнисене мӗнле туса пынине тӗрӗслесе тухрӗ.

Ку конферентсире 13-мӗш конферентси кӑтартса хӑварнӑ тӑрӑх ӗҫлесе пырса пирӗн республӗкри партти орканисатсийӗ пысӑк ҫитӗнӳсемех туни палӑрђӗ.

Йалхуҫалӑхне ҫӗнетес тӗлӗшпе ђылай пысӑк ӗҫсем туни курӑнат. Ҫураки кампанийӗ партти орканисатси тӑрӑшса ӗҫлесе, вӑл ӗҫе массӑсене нумай хутшӑнтарнипе аван иртнӗ. Ҫуракинђе вӑрлӑха тасатса акма шутласа хунинђен те ытларах тасатнӑ — плана 128 прођђӑн таран пурнӑҫа кӳртнӗ. Тырӑ акнӑ ҫӗр ҫуракинђе 7.000 кектар ӳснӗ. Нумай пусӑва куҫнӑ ҫӗр пӗлтӗр 42.000 кектар шутланнӑ, кӑҫал вӑл 61.000 кектара ҫитнӗ. Хаљхи вӑхӑтра республӗкри хуҫалӑхсен 30 прођђӑнӗн плук пур. Сухапуҫ пӗтӗмпех прахӑҫа тухса пырат. Талкӗшпе ҫӗрйӗркелес ӗҫе пуҫласа йанӑ: ку ӗҫе хаљ пурӗ 6 районта туса пыраҫҫӗ.

Иртнӗ кӗркуннеренпе 177 ҫӗнӗ ушкӑнлӑ хуҫалӑх тунӑ. Ушкӑнлӑ хуҫалӑхсен шуђӗ хаљхи вӑхӑтра 367 ҫитнӗ. Тӗрлӗрен йалхуҫалӑх ушкӑнӗсем пурӗ 682 шутланаҫҫӗ. Ҫак хушӑра тата ҫӗнӗрен йалхуҫалӑх копператси сойусӗсем уҫнӑ (ђӑх-ђӗп копператси сойусӗ, выљӑх-ђӗрлӗх копператси сойусӗ). Йалхуҫалӑх машшинӗсене планра кӑтартнинђен 11 прођђӑн ытларах кӳрсе килнӗ. Хресђенсем хушшинђе пурӗ 24.132 тӗрлӗ машшин салатнӑ.

Ҫапла ҫак иртнӗ ҫул хушшинђе йалхуҫалӑхне ҫӗнетсе вӑйлатас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсем, ђӑваш йалхуҫалӑхӗ кайалла кайса пырат, вӑл йухӑнса пырат текенсен суйеҫне аванах кӑтартса пађӗ. Вӑл ҫитӗнӳсем ђӑваш йалхуҫалӑхӗ, ӑна партти кӑтартса панӑ ҫулпала илсе пырсан, ҫӗнӗрен йусанса, тӗреклӗнсе нумай тырпул паракан пулма пултарассине пит таса кӑтартса тӑраҫҫӗ.

Конферентси пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫа кӳртес тӗлӗшпе пирвайхи ҫур ҫулта мӗн тунине тӗрӗслесе тухрӗ. Ку тӗлӗшпе Опком ҫереттарӗ Петров й-таш хӑйӗн токлатӗнђе ҫапла каларӗ:

„Епӗр пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх ҫур ҫул хушши ӗҫленӗ пулин те, вӑл плана тӗпӗ-йӗрӗпе тишкерсе тухса кирлӗ ђыхвӑрсем йышӑнса ҫитереймен. Анђах ҫак ҫур ҫул хушшинђе те епӗр малтан шутласа хунӑ ђыхвӑрсенђен ытларах укҫа-тенкӗ йани курӑнсах тӑрат. Ҫапла ӗнтӗ хуҫалӑх хӑвӑрт вайланса пырасси паллах“.

Пилӗк ҫуллӑх планра Ђӑваш республӗкӗн ҫӗнӗ строиттӗлствине 93 мӗлйун тенкӗ йама шутласа хунӑ. Ҫав плантах йалхуҫалӑхпе вӑрман хуҫалӑхне хӑпартма 65 мӗлйун тенкӗ картса хунӑ. Пилӗк ҫуллӑх план тӑрӑх пирӗн республӗк пӳтшеђӗ те пит нумай ӳсмелле: кӑҫалхи пӳтшет 11 мӗлйун та 330 пин тенке ҫитнӗ, пилӗк ҫултан вӑл 46 мӗлйун тенкӗрен те иртмелле.

Пирӗн промышлӗннӑҫ ӳсет. Кӑҫал ҫӗнӗрен тӑвакан савӑтсенђен хӑшӗ-пӗри ӗҫлеме те тытӑнаҫҫӗ (Ҫӗмӗрлери „Тупиттӗл“ савӑт, Вӑрнарти фосфорит арманӗсем, скипитар савӑђӗ т. ыт. те). Ҫӗмӗрлери пысӑк компинатпа Куславккари ҫуртйӗр хатӗрӗсем тӑвакан савӑта та тума пуҫланӑ.

Ҫапла ӗнтӗ пилӗк ҫуллӑх плана пурнӑҫа кӳртсен пирӗн республӗк хуҫалӑхӗ вайланса каймалли паллах. тата кунпа пӗрле ђӑваш ӗҫхалӑхӗн пурнӑҫӗ те нумай йусанасси курӑнсах тӑрат.

Ҫак ҫитӗнӳсемпе пӗрлех конферентси 13-мӗш конферентси кӑтартса хӑварнисенђен хӑшӗ-пӗри пурнӑҫа ҫителӗклӗ кӗрсе пыманнине кӑтартса пађӗ. Сӑмахран, 13-мӗш конферентси промышлӗннӑҫри ӗҫсем тӗлӗшпе кӑтартса хӑварнисем (ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартасси, протуксине йӳнерех ларакан тӑвасси, строиттӗлствӑна йӳнетесси т. ыт. те) вырӑна ҫителӗклӗ кӗрсе пыни курӑнмаст. Сотсиалисӑмла ӑмӑртӑва та массӑсене кирлӗ ђухлӗ хутшӑнтарайман ха. Тата куљттурӑпа опщӗствӑллӑ массӑллӑ ӗҫсене: хут пӗлменнине пӗтересси, кӗҫӗн шкулсенђе пурне те вӗрентме пуҫлассი, траххомпа кӗрешесси,— ҫак ӗҫсене тумашкӑн ђухӑнпа вӑтам хресђенсен массисене ҫителӗклӗ хутшӑнтарса пыманнине кӑтартса пађӗ. Ҫавӑнпа ку тӗлӗшпе малашне ӗҫе вӑйлатмалла, тӗплӗрех туса пымалла.

Кулака пур йенђен те хӗссе пырас тӗлӗшпе ҫак хушӑра ђылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ пулин те, ку тӗлӗшпе те ҫитменлӗхсем пуррине кӑтартрӗ конферентси. Кулакпа кӗрешесси хӑшпӗр ӗҫре кирлӗ пек пулса пыраймаст, сӑмахран, налук ӗҫӗнђе, тырӑ хатӗрлес ӗҫре, кретит ӗҫӗнђе кулак сӗртӗнкелесе ӗҫе пӑсни палӑрат.

Кулакпа кӗрешес ӗҫе вӑйлатмалла, ҫак ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе хытӑ тӑрӑшса ӗҫлемелле терӗ конферентси.

Конферентси вăтам хресҫенсене налук тĕлĕшпе ҫăмăлăх парас ĕҫе саккун тăрăх лайăх туса пынипе пĕрле, пуйан, кулакла хуҫалăхсем ҫине налука уйрăм шутласа хурассине тĕрĕсрех туса пымаллине, ку тĕлĕшпе налук аппараҫĕсен ĕҫне лайăхлатмаллине астутарҫĕ.

Йалхуҫалăхне хăпартас ĕҫре усă курмашкăн конферентси тепĕр ҫĕнĕ май кăтартса хăварҫĕ:

„Йалхуҫалăхне ҫĕнетсе вăйлатас ĕҫре уйрăм йалсем ваҫҫи хуҫалăхăн происвотствăллă планĕсем туни усăллă тесе шутлас. Вăл плансене тăвас ĕҫе те, планра кăтартнине пурнăҫа кӳртес ĕҫе те массăсене нумайрах хутшăнтарма тăрăшмаллине кăтартса парас“, тенĕ конферентси решенийĕнҫе.

Партти орканисатсинҫе сылтăм сулăнҫăк палăрнине кура (колхоссем кирлине, ҫухăнсене орканисатсилес ĕҫе вăйлатмаллине шута илменни, кулаксемпе ҫыхланса кайни т. ыт. те), унпа хытă кĕрешсе пымалла.

Пиҫет ĕҫĕнҫе 13-мĕш конферентси решенисем тăрăхах ĕҫлесех пырса, малашне сылтăм сулăнҫăкпа, парттин ленинла ҫулйĕрĕнҫен сулăннисемпе, уйрăмăн илсен, ҫăваш хуҫалăхĕн вăйне тĕрĕс шута илме пĕлменнипе, ăна йăнăш ҫулпа йама хăтланакансемпе хытă кĕрешес пулать,—терĕ конферентси.

Конферентси кăтартса панă Ҫăваш респуплĕк хуҫалăхĕн ҫитĕнĕвĕсем,—Октăпĕр револҫутсийĕ ҫăвашсене нимĕн те паман, текенсен суйеҫлĕхне, вĕсем партти ҫулĕнҫен пăрăнса кайнине пит лайăх кăтартса паҫĕҫ.

Ҫăваш хуҫалăхĕн ҫулйĕрне ăнланайманнисен, ăна йăнăш ҫулпа йарас текенсен шухăшĕсем партти шухăшĕ мар; 13-мĕш конферентси ку тĕлĕшпе йышăннисемпе килĕшмесĕр, весене хирĕҫ пыракансен йăнăш шухăшĕсемпе вирлĕн кĕрешмелле,— тесе хăварҫĕ конферентси.

Парттин ҫăваш орканисатсийĕпе ĕҫхалăхĕ умĕнҫе пит пысăк ĕҫсем тăраҫҫĕ. Вăл ĕҫсене пурнăҫа кӳртсе пырса сотсиалисăм тумашкăн хастарлăха ӳстерсе ăмăртса ĕҫлесе пымалла.

Партти орканисатсийĕ тавра ҫирĕппĕн пĕтĕҫсе 14-мĕш конферентси решенийĕсене мĕн вăй ҫитнĕ таран пурнăҫа кӳртсе пыма тытăнар.

---

* * *

Йарма купăс — икĕ рет,
Шăнкăравлă ҫемĕ,
Сасси уҫă.
Сана аса илтерет
Шухăшланă ҫемĕн,
Хура куҫăм.

Аҫаш шухăш пуҫăма
Ыталаса илҫĕ,
Тăвăлланҫĕ.
Кĕрен-йарăм шуҫăма
Ҫуптăвассăм килҫĕ —
Ҫун хурланҫĕ.

Ĕмĕт туртрĕ хирелле...
Тунсăхланă йура
Ыйтрĕ ирĕк.
Кĕмĕл сăнлă ирпеле
Мана хапăл турĕ
Йешĕл ҫирĕк.

Хаҫ ҫĕнелнĕ уй-хире
Ытарма пĕлмесĕр
Хирĕҫ тухрăм;
Ҫир-ҫĕр витнĕ тумтире
Нимĕн хĕрхенмесĕр
Хывса утрăм.

Кунта епĕ инҫерен
Ҫиртен сывалмашкăн
Тухса килтĕм.
Сана, тусăм, ҫĕререн
Нимпе манайманшăн
Аса илтĕм...

Йарăм-йарăмăн йаран
Пайарка ĕретĕн
Ҫавка пуҫĕ!
Халĕ ес те вăйăран
Пурнăҫа кĕретĕн,
Хура куҫăм.

Лăпкă тинĕс пусăра
Кăмăла хăпартрĕ
Ирхи сулхăн.
Кĕмĕл купăс сасăра
Ҫĕреме вăратрĕ
Комсомолккă.

Ҫавăнпа та уй-хире
Икĕ ретлĕ купăс
Илсе килтĕм.
Ҫун йуратнă сар хĕре
Шухăшпала вăрттăн
Аса илтĕм.

* * *

Анлă Атăл ҫийĕ — кантăк,
Хумĕсем — кăвак кăтра.
Ес каларăн: — „Йуратан-тăк,
Ҫыру йар виҫ талăкран“.

Талăк мар хаҫ, ик ерне те
Сансăр пуҫҫĕр тунсăхлап.
Питĕ шел ес, хĕрхенетĕп,
Ак итле, йепле пулса:

Макăрас килетҫĕ темшĕн
Вăл халавлă йанкăс каҫ.
Пĕлтĕр ҫырнă сăввăмсемшĕн
Манпа хаҫ те йатлаҫаҫ.

Сăввăмсем йутах тухаҫҫĕ,
Ан тив, йулҫҫĕр тăлăхах.
Тен, еп хам та лăпкă каҫҫĕн
Куҫҫуҫ тăкнă кăлăхах.

Ҫынсем ҫырҫĕҫ „Ҫирĕм улттă“,
Аппаланҫĕҫ «Сĕрĕмре».
Ăнлансамҫĕ, комсомолккă,
Есĕ ҫеҫ ман ҫĕремре!

Саншăнах пайан ман йура,
Саншăн ҫеҫ хавас ҫĕре.
Сывлăмпа ирех пит ҫурĕ
Йешĕл лаптăкла ҫерем...

Анлă Атăл та ав кантăк,
Умра ватă Шупашкар.
Ес каланăҫĕ: — „Саван-тăк
Ерне хыҫҫăн ҫыру йар“.

* * *

Ирсерен ирех илемлĕ
  Шуҫăм килеспе
Уй-хиртенҫке еп илетĕп
  Сăвă тивлетне.

Ҫамрăк ҫунăм, тур ҫухласшĕ,
  Выҫа та, йурла!
Санпала пайан туслашрĕ
  Хурăҫă ҫурла.

Кăҫăрт-каҫăрт сар ырашĕ
  Мана — каскăна
(Усалла-ши йе ырра-ши)
  Йăпататĕ кăна.

Аслă, ирĕк, ҫут тĕнҫеҫĕм,
  Урăх мĕн ҫырас?
Ыраш хумĕ пек ҫĕклепҫĕ
  Манăн кĕмĕл сас.

Ирхине ирех вăрантăм,
  Ҫыртăм ҫак сăвва.
Ҫурлана еп сăвăран та
  Ытларах савап.

**Тукташ.**

КАСАККОВ К. Н.

# Ђăваш республĕкĕнђе натси политтĕкĕ пурнăçа мĕнле кĕрсе пырат*.

## Партти кăтартса панисем.

Комуниссен парттийĕ натси политтĕкне ĕлĕкех хăйĕн ђи кирлĕ ĕçĕсенђен пĕри вырăнне шутланă. Комуниссен парттийĕ натси политтĕкне тĕрĕс тытса пынă пирки анђах пирĕн Совет Сойусĕнђи тĕрлĕ вак халăхсем пĕрлешме пултарнă. Парттипе совет влаçĕ натси политтĕкне тĕрĕс тытса пынипе, Совет Сойусĕнђи ĕлĕк пусмăрта пурăннă пур вак халăхсем те хаљ хăйсен ирĕкĕпе хăйсен ђĕлхипе çĕнĕ пурнăç туса пыраççĕ.

Парттин 12-мĕш сиесĕ натси политтĕкĕ тăрăх питĕ кирлĕ пысăк решшенисем йышăнса хăварђĕ. Ку решшенисене пурнăçа кĕртес шутпа, Партти Тĕпкомĕ çумĕнђи вак халăхсен канашлăвĕ (1923-мĕш çулта) натси политтĕкне вырăнсенђе пурнăçа мĕнле кĕртсе пырасси çинђен татăклă кăтартусем йышăнса хăварђĕ. Ку кăтартусене пурнăçа кĕртес тĕлĕшрен Партти Опкомĕ ђылай татăклă ĕçсем турĕ: 1) Ђи малтан, Парттин 12-мĕш сиесĕ натси политтĕкĕ çинђен йышăннисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшрен Парттин Ђăваш Опкомĕ (1923 ç.) çакăн пек татăклă сатађсене пурнăçа кĕртмелле тесе йышăнса хăварнă: ђăваш ђĕлхине пĕлмен слушăшђисене ђăваш, йе ђăваш ђĕлхине пĕлекен ђухăнсемпе улăштармалла. Вăл ђухăнсене уђрештенире ĕçлеме вĕрентес шутпа васкасах курссем туса иртермелле. Ответлă ĕçре ĕçлекен комуниссен ђăваш ђĕлхине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе хытă ĕçлеме тытăнмалла, хăйсем ђăваш ђĕлхине пĕлмеççĕ пулсан, васкасах вĕренме тытăнмалла. Шкул ĕçне сарса пымалла, вăтам шкулсене куринђен ытла ђухăн ађисене илмелле, ђăвашсенђен ĕçлекенсем хатĕрлессине вăйлатмалла, ку шутпа типокрафипе „Йĕтинствă" хапрăкĕ çумĕнђе шкулсем уçмалла. Метитсинă тĕлĕшпе ĕçлекенсене тĕттĕм ђăвашсем çине ытларах çаврăнса пăхтармалла, кĕнеке кăларассине вăйлатмалла. Кун хыççăнах Партти Опкомĕ натси политтĕкне мĕнле пурнăçа кĕртсе пыма тытăнасси çинђен йатарласа план туса хатĕрленĕ. Унтан, Ђăваш Опкомĕ натси политтĕкĕ вырăна мĕнле кĕрсе пыни çинђен уйрăм ыйтусем тăрăх нумай хутђен кăтартусем панă. Натси ыйтăвĕ Парттин Ђăваш орканисатсин ђылай конферентсисен кун йĕркинђе тăнă. Сăмахран, 8-мĕш конферентси (1924 ç.) натси политтĕкне пурнăçа кĕртес тĕлĕшрен кирлĕ таран ĕçлесе пырайманнине палăртса, пуринђен ытла политтĕкпе куљттурă йенђен ĕçлесе пымаллине кăтартса хăварнă. 9-мĕш конферентси (1924-мĕш çулах) тата тĕплĕрех кăтарту парса хăварнă, вăл пуринђен ытла натси политтĕкĕ çинђен ăнлантарса парасси, вак халăхсем ваљђи ĕçлекенсем хатĕрлесси тата аппарата ђăвашлатасси çине кăтартса панă. 10-мĕш конферентси (1925 ç.) умĕн Ђăваш оплăçне республĕк тунă. Конферентси оплăçрен республĕк тунине ырласа, Ђăваш республĕкĕн хуçалăхпа куљттурине вăйлатма пулăшакан майсем (промышлĕннăçа сармалли план, йалхуçалăх ӳсĕмне хăвартлатасси, куљттурă строиттĕлстви тата ыттисем те) туса хатĕрлеме хушса хăварнă. Кунпа пĕрлех, конферентси Ђăваш республĕкĕн территторийĕ ăсланнă майĕпе тата вак халăхсен йышĕ нумайланнă пирки, натси политтĕкне нихçанхинђен те лайăхрах, тĕрĕсрех тытса пыма кирлине астутарса хăварнă.

11-мĕшпе 12-мĕш конферентсисем пуринђен ытла аппарата ђăвашлатассипе ђăваш ђĕлхине пурнăçа кĕртес ыйтусем çинђе ђарăнса тăнă. 13-мĕш конферентси ђăваш ђĕлхине пурнăçа кĕртес тĕлĕшрен, куљттурă ĕçĕнђе татăклă çул тытса пыма кирлине кăтартса хăварнă.

Çак, партти кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе епĕр халиђђен ђылай паллă ĕçсем тунă, пĕтĕмпе илсен, пирĕн республĕкре натси политтĕкĕ пурнăçа тĕрĕс кĕрсе пырат. Епĕр ăна айалта кăтартнисенђен курăпăр.

## Ђăваш республĕкĕн хуçалăхĕ.

Октăпĕр револђутсиђђен ђăваш ђухăнĕсенђен нумайăшĕ кулаксем, çĕрулпуђĕсем т. ыт. патĕнђе асапланса пурăннă. Вĕсенђен 10.724 хуçалăхăн çĕр пулман, вăл 6 прођђăн пулат. Октăпĕр револђутсийĕ Ђăваш республĕкĕнђи хресђен аллине пурĕ малтан акса тунă çĕрсемсĕр пусне çĕрулпуђĕсемпе кулаксен çĕрĕсене туртса илсе 46 пин кектар панă. Кунсăр пусне, тĕрлĕ фонтсенђен панине шутласан, хресђен акса тăракан çĕр хутшăнни пĕтĕмĕшпе 70 пин кектара çитет (Çĕрĕç комиссариађĕн ђыхвăрсем тăрăх).

Çапла вара Октăпĕр револђутсийĕ ђухăнсемпе вăтам хресђенсене ђылай çĕр пађĕ. Вăл çĕрсем çинђе ĕлĕк çĕрулпуђĕсемпе кулаксем шӳсе пурăннă.

Октăпĕр револђутсийĕ хыççăн ђăваш хуçалăхĕ çапла ӳссе пынă:

Акмалли çĕрсем 1917-мĕш çулта 525.211 кектар пулнă, 1928-мĕш çулта 535.866 кектара çитнĕ.

1927—28-мĕш çулсенђе нумай уйа куçас тĕлĕшпе тытăннă çĕр шуђĕ 61.743 кектара çитет.

Йалхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕ туса кăларакан пĕтĕм тупăш 1925—26-мĕш çулта 68.947 пин тенкĕ пулнă, 1926—27-мĕш çулта—76.375,7 пин, 1927—28-мĕш çулта—84.044,4 пин, 1928—29-мĕш ç.—95.805,1 пин тенке çитнĕ. Вăтамран илсен, çын пусне йалхуçалăхăн тупăшĕ çакăн пек тивнĕ: 1925—26-мĕш çулта—68,1 тенкĕ, 1926—27-мĕш çулта—79,1 тенкĕ, 1927—28-мĕш çулта—86,3 тенкĕ, 1928—29-мĕш çулта—97,4 тенке çитнĕ.

1924-мĕш çулхипе 1928-мĕш çулхине танаштарса пăхсан, акакан çĕр шуђĕпе те, выљăх-ђĕрлĕх усрас тĕлĕшпе те вăтамсен хуçалăхсем çитĕнсе пыни курăнат.

Пирĕн Ђăваш республĕкĕнђи промышлĕннăç йулашки çулсенђе малаллах утса пырат. Çак çултан пуçласа çĕнĕ хапрăк-савăтсем лартма тытăнтăмăр (Çĕмĕрле кăмпинађĕ, Куславккари çурт-йĕр хатĕрĕсем тăвакан савăт, фосфорит арманĕсем, кирпĕђ савăђĕсем тата ыт. те). Çĕнĕ хапрăк-савăтсем тунипе Ђăваш республĕкĕнђи ĕçлекенсен йышĕ те ӳсет.

---

* Партти Опкомĕн 3-мĕш пленăмĕнђе тунă токлатран.

Ҫапла вара, Ђăваш республĕкĕн хуҫалăхĕ уссех пырать. Партти натсин политтĕкĕ тĕрĕс пулса пынипе ђăваш ĕҫхалăхĕ те ура ҫине тăрса сотсиалисăм тăвас ĕҫе хастарлăн хутшăнса пырать.

„Ђăваш хуҫалăхĕ“ йатлă шурналăн 3—4-мĕш №-ĕнђи умĕнхи статйара—Октапĕр револђутсийĕ ђăваш ĕҫхалăхне нимĕн те памарĕ, ђăваш хуҫалăхĕ малалла мар, кайалла кайать, тесе ҫырни тĕрĕс марри ҫӳлте кăтартнă ђыхвăрсенђен лайăх курăнать. Ахаљрен мар, ăна парттин Ђăваш орканисатсин 13-мĕш конферентсийĕ хыттăн сивлесе хăварђĕ.

## Аппарата ђăвашлатассипе ђăваш ђĕлхине пурнăҫа кĕртесси.

Райĕҫтăвкомсенђе 1928-мĕш ҫулта ђăвашсем—69,38 прођђăн, вырăссем—38,94 прођђăн, тутарсем—0,26 прођђăн, ирҫесем—0,70 прођђăн, ыттисем—0,71 прођђăн пулнă. Вăтамран илсен, райĕҫтăвкомсенђе ĕҫлекенсенђен ђăваш ђĕлхине пĕлекенсем 1928-мĕш ҫулта 79,66 прођђăн пулнă. Иртнĕ суйлавра суйланнă райĕҫтăвком ђленĕсем хушшинђе ђăвашсем—72,7 прођђăн, вырăссем—21,7 прођђăн, тутар—2,67 прођђăн, ирҫе—2,37 прођђăн, ыттисем—0,56 прођђăн. Йалсоветсенђе 1928-мĕш ҫулта ђăвашсем—62,48 прођђăн, вырăссем—37,77 прођђăн, тутар—2,33 прођђăн, ирҫе—2,33 прођђăн, ыттисем—1,1 прођђăн пулнă. Йулашки суйлавра йалсоветсене ђăвашсем—79,2 прођђăн, вырăссем—15,16 прођђăн, тутар—2,71 прођђăн, ирҫе—2,9 прођђăн, ыттисем—6,3 прођђăн суйланнă (светĕнисене 13 район тăрăх кăна илнĕ). Ђăваш ђĕлхине пурнăҫа кĕртес ĕҫ йалсоветсенђе кирлĕ таран пулса пыраймасть-ха: ђăваш ђĕлхине 75—100 прођђăн таран пурнăҫа кĕртнĕ йалсоветсем — 74 (17,91 прођђăн), 50—75 прођђăн кĕртнисем 74 йалсовет (17,91 прођђăн), 25—50 прођђăн кĕртнисем—171 (41,4 прођђăн), 25 прођђăнран кайа кĕртнисем 94 йалсовет.

Республĕкри уђрештенисенђе (Шупашкарта) ђăваш ђĕлхине пĕлекен слушăшђисем 56,6 прођђăн шутланаҫҫĕ.

Пĕтĕмпе илсен, ђăваш ђĕлхине пурнăҫа кĕртес ĕҫ республĕкри уђрештенисенђе хаљ те наљар тăрать. Хутсене ђăвашла 0—25 прођђăн ҫитиђђен кăна ҫыраҫҫĕ. Ђăваш ђĕлхи ҫине, хăшпĕр слушăшђисем йенђен, сиввĕн пăхни те сисĕнет. Республĕкри 22 уђрештенире ĕҫлекен пĕтĕм слушăшђисенђен ђăвашсем 44,8 прођђăн, вырăссем 53,18 прођђăн, тутар—0,57 прођђăн, ытти халăхсем—1,45 прођђăн. Вĕсенђен хресђенсем—26,14 прођђăн, ĕҫлекенсем—14,96 прођђăн, слушăшђисем—58,9 прођђăн. Парттипе комсомол ђленĕсем — 16,87 прођђăн.

## Кулђтурă ĕҫĕ.

Хут пĕлекенсем уйрăм вак халăхсем хушшинђе 1.000 ҫын пуҫне ҫакăн ђул тивеҫҫĕ: тутар—226 ҫын, ирҫе—247, ђăваш—345, вырăс—463. Хут пĕлменнисем хĕрарăмсем хушшинђе нумайтарах: 1.000 ҫын пуҫне хут пĕлекен арҫынсем 515 ҫын тивеҫҫĕ, хĕрарăмсем—226 ҫын анђах. Уйрăм вак халăхсем тăрăх илсен, 1.000 ҫын пуҫне хут пĕлекен хĕрарăмсем ҫакăн ђул тивеҫҫĕ: вырăс—334, ђăваш—200, тутар—157, ирҫе—83 ҫын.

I-мĕш сыпăклă шкулсенђе ђăваш ађисем 49.028 (75,5 прођђăн), вырăссем—12.887 (19,83 прођђăн), ирҫе—1.280 (1,96 прођђăн), тутар — 1,699 (2,62 прођђăн) вĕренеҫҫĕ. I-мĕш сыпăклă шкулсенђе вĕренекен хĕрађасем пурĕ 20.847, вĕсенђен ђăвашсем—70,37 прођђăн, вырăссем—25,12 прођђăн, ирҫе—1,57 прођђăн, тутар—2,81 прођђăн.

Вăтам шкулсенђе 1927—28-мĕш ҫулта пурĕ 7.349 ҫын вĕреннĕ, вĕсенђен ђăвашсем 5.463 ҫын. Ку шкулсенђе ирҫесемпе тутарсем сахалтарах. Вăтам шкулсенђе вĕренекенсенђен (2-мĕш сыпăклă шкулсемпе Х. Ҫ. шкулĕсемсĕр пуҫне) 1927—28-мĕш ҫулта ĕҫлекенсем — 236, патраксем—31 анђах. Ҫавăнпа та ĕҫлекенсемпе патраксене вĕренме илес ĕҫе вăйлатса пымалла.

I-мĕш сыпăклă шкулсенђе пур ҫĕрте те тăван ђĕлхепе вĕрентеҫҫĕ. Вăтам шкулсенђе тăван ђĕлхепе вĕренес ĕҫ йăвăртараххăн пулса пырать. Вĕсем ваљђи ђăваш ђĕлхипе ҫырнă литтературă сахал. Тепĕр йенђен, хăшпĕр вĕренекенсем йенђен ђăваш ђĕлхи ҫине пӳрне витĕр пăхни те сисĕнкелет. Малашне тăван ђĕлхене шкулсенђе пурнăҫа кĕртесси пысăкран та пысăк сатађ пулса тăрать. Ку тĕлĕшрен ҫутĕҫ оркăнĕсен анђах мар, парттипе совет оркăнĕсен те хытăрах ĕҫлеме тытăнмалла. Шкул прокраммисене хаљхи сатађсемпе вирлĕрех ҫыхăнтарса пымалла. Вĕсенђе ĕҫлекенсемпе хресђенсен ҫыхăнăвĕ ҫинђен ăнлантарса парса, пролеттарилле руководствăна ҫирĕплетсе пырассипе вĕрентессине лайăх кăтартмалла.

## Вĕреннĕ ҫынсем хатĕрлесси.

Хуҫалăхпа кулђтурă строиттĕлствин сатађĕсем пысăкланса, аслăланса пынă майĕпе пирĕн ума вĕреннĕ ҫынсем хатĕрлес сатађ хыттăнах тухса тăрать. Аслă шкулсене йарас ĕҫе епĕр йĕркелесе ҫитеретпĕр ĕнтĕ, анђах аҫпирантсем пулма вĕренме йарас ĕҫ ним плансăрах пулса пырать. Аҫпирантсем хушшинђе комуниссем ҫукпа пĕрех. Малашне аҫпирантсем пулма ĕҫлекенсемпе патраксем, ђухăнсем, ĕҫ хресђенĕсем хушшинђен тухнă йулташсене, комуниссене ытларах йамалла.

## Искусствă.

Ђăвашсен хутошĕствăллă кулђттури Октапĕр револђутсийĕ хыҫҫăн ирĕклĕн сарăлса пыма пуҫларĕ. Литтературăра тата мусăккăра хутошĕствăллă просветенисем шут йенђен те, пахаллăх (кађђĕствă) тĕлĕшпе те нумайланнă: театăр, кино, ратио тата ыт. те. Ђăваш мусăкне сарас тĕлĕшпе йатарласа мусăк шкулĕ уҫмалла йышăннă. Паллах, искусствă ĕҫĕнђе пирĕн паллă ҫитменлĕхсем те нумай-ха. Ђăваш искусствине вăйлатасси ҫинђен Партти Опкомĕ хăйĕн майăн 7-мĕшĕнђе йышăннă постановленинђе лайăх кăтартса парђĕ (вăл „Канашăн“ 97-мĕш №-ĕнђе ҫапăннă).

## Сулăнђаксем.

Пĕтĕмпе илсен, пирĕн республĕкре натси политтĕкĕ пурнăҫа тĕрĕс кĕрсе пырать. Кăна Парттин Тĕп Контролђ комиҫҫин комиҫҫийĕ те (март уйăхĕнђе килсе кайнă) лайăх кăтартса парђĕ. Уйрăмăн

илсен, натси политтĕкне пăсакансем пур. Хаҫепĕр капиталисла елементсене хĕссе, сотсиалисăмлă пайсене сарса пыратпăр. Ҫак вăхăтра, парттипе совет влаҫĕн политтĕкĕпе килĕшме пултарайман непмăнсемпе кулаксем натси политтĕкĕ тăрăх совет влаҫне елеклеме пăхаҫҫĕ. Вĕсен елекĕсене хăшпĕр ҫухне кайа йулнă ĕҫҫыннисем те (вăхăтлăх, ҫесонлă ĕҫлекенсем, крусҫĕксем тата ыт.) итлеҫҫĕ.

Аппарата ҫăвашлатни аппарата тĕп халăх масси ҫумнерех ҫывхартаť. Аппарата ҫăваш ĕҫлекенĕсене, патракĕсене тата ҫухăнсемпе вăтамсене илни ҫинавникле слушăшҫисене тарăхтараť. Вĕсем вара тӳрех натси политтĕкне йарса илсе, шовинисăмла шухăшсем сараҫҫĕ.

Тепĕр йенҫен кулаксемпе ĕҫхалăхĕнҫен мар тухнă интелекентсене автономи туни кăмăла кайман. Вĕсем ĕлĕкхи пекех хăйсем пуҫ пулса тăрса, ҫăвашсене ним вырăнҫе мар усрасшăн тăрăшаҫҫĕ. Кăна пире Йетĕрнери ĕҫсем те лайăх кăтартрĕҫ. Унта Совет влаҫне хирĕҫле интелекентсем автономи нимĕн те памарĕ тесе сăмах сарнă.

Вак халăхсем хăйсен пурнăҫне, пĕтĕм ĕҫе хуҫалăхпа кул̧ттурă ăрасналăхне астуса тăван ҫĕлхепе туса пырсан анҫах ҫăмăлăн хăпартма пултараҫҫĕ. Парттин натси политтĕкĕ вак халăхсене сотсиалисăм ĕҫне йут ҫĕлхепе мар, хăйсен тăван ҫĕлхи урлах хутшăнтараť. Ҫакна ăнланман йе ăнланма тăрăшманнисем комуниссемпе комсомолĕссем хушшинҫе те пур. Ун пеккисем ҫăваш кул̧ттурипе ҫăваш ҫĕлхине ним вырăнне те хумаҫҫĕ. Акă, Шупашкарти йăвăҫ каскалакан савăтри пĕр комсомолĕс: „ҫăваша вырăслатса пырас пулаť", унсăрăн ҫăваш малалла каймасť, вырăсла ҫырнă кĕнекесене ăнланмасť, тесе ҫыраť. Ҫакăн пек ҫынсем вĕсем натси политтĕкне ăнланма шутламаҫҫĕ, массăран уйăрлса кайса массă мĕнле ӳссе пынине курмаҫҫĕ.

Тепĕр сулăнҫăкĕ вăл вырăнти уйрăмлăхсене ытла мала, ытла пысăка кăларса тăратнинҫен тухса тăраť. Ун пек ҫынсем натси политтĕкĕн картинҫе хĕсĕнсе, Совет Сойусĕнҫи промышлĕннăҫлă районсемпе ҫыхăнмасăр ĕҫлесе пырасшăн. Кун пек сулăнҫăк вăл сотсиалисăм тăвас ĕҫрен пăрса йарса пуршуаҫиллĕ шовиниссен ҫулĕ ҫинех илсе пыраť, тенĕ Сталин й-таш. Ҫакăнпа пĕрлех, вăл сулăнҫăк Октăпĕр револ̧утсийĕ вак халăхсене кул̧ттурлăхпа хуҫалăх йенҫен панă тивĕҫлĕхе маннинҫен те паларать.

Пирĕн Ҫăваш респуплĕкĕн условийĕнҫе кун пек сулăнҫăк пурри Ҫăваш респуплĕкĕ Ҫулхула оплăҫне кĕнине хăшпĕрисем хирĕҫ тăнинҫен, Ҫулхула оплăҫне кĕни усăллă мар йапала тесе елек сарнинҫен курăнаť. Тата ку йапала Ул̧йанăвскри ҫăваш шкулĕн уйавне иртернĕ ҫух та палăрҫĕ.

Сулăнҫăксем пирĕн хăшпĕр ҫухне литтераттурăна та кĕркелесе кайаҫҫĕ. Партти Опкомĕн пӳровĕ хăйĕн ҫăвашсен хутошĕствăллă кул̧ттурине сарасси ҫинҫен йышăннă постановленинҫе литтераттурăна хăшпĕр ҫухне вак пуршуаҫиллĕ, шовинисăмла шухăшсем кĕрсе кайнине кăтартса паҫĕ.

Натси ыйтăвĕнҫи сулăнҫăксем натси ыйтăвне пурнăҫа кĕртсе пынă ҫĕрте хытă ҫăрмантарса тăраҫҫĕ. Ҫавăнпа вĕсене хирĕҫ хытă кĕрешсе пымалла.

## Малашнехи сатаҫсем.

Натси политтĕкне пурнăҫа кĕртсе пынă ҫĕрте пролеттарилле клас ҫулйĕрне малашне те ҫирĕп тытса пымалла. Ҫăваш респуплĕкĕнҫе пурнакан халăхсем хушшинҫе интернатсионалла вĕрентес ĕҫе сарса пымалла. Ҫăваш респуплĕкĕнҫе пурнакан халăхсен хуҫалăхĕпе кул̧ттурлăхне пĕтĕм Совет Сойусĕнҫи хуҫалăхпа кул̧ттурă ĕҫĕн ӳсĕмĕпе танаштарса пырас тĕлĕшпе ĕҫлемелле.

Ҫăваш, тутар тата ирҫе ĕҫлекенĕсене промышлĕннăҫлă претприйаттисене хутшăнтарас тĕлĕшрен пĕрмай ĕҫлесе пымалла. Ҫавнашкалах, Ĕҫ комиссариаҫĕн ҫăваш ĕҫхалăхне ҫукун ҫулпа Атăл таврашне те ĕҫе хутшăнтарса пымалла. Ҫаксене пурнăҫа кĕртнĕ ҫух ҫĕнĕрен лартакан хапрăк-савăтсем ҫине лайăхрах ҫавăнса пăхмалла. Профшкулсен пурнăҫне лайăхлатмалла, ĕҫĕсене хăпартса пымалла.

Патшалăх аппаратне ҫине тăрсах ҫăвашлатмалла. Аппарата ĕҫлекенсене, патраксене, ҫухăнсене тата вăтамсене илсе пырассине вăйлатмалла. Партти, совет тата ыт. оркăнсен хăйсен ĕҫĕсене пĕтĕмпех вырăнти халăх ҫĕлхипе туса пыма тытăнмалла. 1929—30-мĕш ҫултан пуҫласа пĕрмай ĕҫлекен ҫăваш ҫĕлхине вĕрентекен тĕп курс уҫмалла. Массăллă ĕҫе илсе пырассине пур ĕҫхалăхне те ăнланмалла ҫĕлхепе туса пымалла. Ответлă вырăнта ĕҫлекенсен ҫăваш ҫĕлхине ҫине тăрсах вĕренмелле.

Шкулсенҫе ҫухăнсемпе патрак аҫисене ытларах вĕрентсе пымалла. Ку тĕлĕшрен ҫухăнсен аҫисене пулăшакан шкул фонҫĕпе тĕрĕс усă курса пымалла.

Ҫав вăхăтрах, аслă шкулсене те клас тĕлĕшĕнҫен йурăхлă ҫынсене кăна йарса тăмалла. Ҫапла майпа, халăха кирлĕ вĕреннĕ ҫынсене клас тĕлĕшĕнҫен ҫирĕп ҫынсенҫен хатĕрлесе пымалла. Тата спетсиалиссемпе тĕрĕс усă курса пырас ĕҫе план тăрăх ҫирĕппĕн туса пымалла.

Вăтам шкулсенҫе ҫăваш ҫĕлхине вĕрентессине ҫулран ҫул сарса пымалла. Шкул прокраммисене хал̧хи пурнăҫпа хытă ҫыхăнтарса пымалла.

Хутошĕствăллă кул̧ттурăна малашне Партти Опкомĕ майăн 7-мĕшĕнҫе йышăннă постановлени тăрăх сарса пымалла.

Аслăлăхпа кул̧ттурă уҫрештенийĕсемпе орканисатсисен ĕҫĕсене сотсиалисăм тăвас сатаҫсемпе таҫăрах ҫыхăнтарса пымалла. Тата вĕсен ĕҫĕсене пĕтĕм ĕҫхалăхĕн тишкĕрсе пымалла.

Ленинла, политтĕкла тата маркҫисла литтераттурăна малашне те сарсах пымалла. Натси политтĕкĕ ҫинҫен, уйрăмăн Ҫулхула оплăҫне кĕнин усси ҫинҫен, пиҫет урлă та, ахал̧ те пĕрмай ăнлантарса пымалла.

Пиҫет ĕҫне вăйлатса пымалла: типокрафи промышлĕннăҫне ҫĕнетмелле, пиҫет тĕлĕшĕпе ĕҫлекенсен йышне вăйлатса пымалла, маркҫисăмла криттĕке ҫине тăрсах вăйлатмалла.

Тутарсемпе ирҫесем хушшинҫи ĕҫе вăйлатасси ҫине уйрăмах ҫавăнса пăхмалла.

Пĕтĕм ĕҫре клас ҫулйĕрне тĕрĕс тытса пырса, Парттипе Совет влаҫĕн натси политтĕкĕнҫен пăрăнакансене тата шовинисăмпа натсионалисăма хирĕҫ вирлĕн кĕрешсе пымалла.




1.

Типҫырма йалĕ путса ларнă йал. Наҭар лутра хура пӳртсем, лапҭăнса пĕтнĕ укăлҭа картисем, выҫса ҫитнĕ, хĕҫ пек ырхан сыснисем пăшатан пек сăмсисемпе укăлҭари ҫереме ҫĕмĕреҫҫĕ. Укăлҭи те сак сарлакăшĕ анҭах, Типҫырма йатлă варăн икĕ йенĕпе кăна хĕсĕнсе йулнă.

Ҫав ҫырма урлă Куҫҫăр Куҫма ывăлĕ Йакку пайан каҫалапа киле персе ҫитрĕ. Ҫитсенех амăшĕ ăна сывĕ уйранпа нӳхрепрен кăмпа илсе тухса ҫиме лартрĕ. Хăй хĕпĕртенипе: «Ах, сăраҭҭĕ, пĕр ҭăм та пулсан сăраҭҭĕ», тесе кускаласа ҫӳрет. Куҫҫăр Куҫма ҭĕлĕме шакка-шакка тапак тултарат̌, вăл та ывăлĕ киле таврăннăшăн савăнат̌.

— Карҭăк, ҫав Ҫтаппансен пулаканҭҭĕ, ҭупса кайса килсем, кайран ҫăпата туса та пулин парăп, тесе арăмне пуйан кӳршĕ патне хăвалат̌.

— Анне, ан ҭăрман, ан кайнă пултăр вăл тинĕс кăвапи патне: пĕр самантра епĕ килнине кантура кайса пĕлтереҫ, тесе ҭарҭĕ Йакку амăшне, хăй ҫавăнтах ашшĕ ҫине хĕрхеннĕ пек пăхса илҭĕ. Ашшĕ те сисрĕ ăна, те сисмерĕ, анҭах ывăлĕ йĕркеллĕ килменнине туйрĕ.

— Мĕн, Йакку, есĕ саккунлах килмен-и мĕн? Мĕншĕн йала пĕлтересшĕн мар? тесе, пуҫларĕ вăл тĕпҭесе ыйтма ывăлĕнҭен, хăй ун патнерех йăпшăнса ларҭĕ.

— Тăттă, ҫапла ҫав! Хусана хоспиттале илсе килҭĕҫ, унта хулла пуҭă амантнă пирки тӳрлетме хуҭĕҫ, пĕр ерне те ҫитмерĕ — тӳрлетсе „сывалакансен команти“ тенĕ ҫĕре йаҭĕҫ. Йытă пурнăҫĕ; ҫиме ҫитмест, шӳрпе выранне йасмăк йашки, вăл та пулин мăшкăлтăк шыв пек анҭах, шалт йăлăхса ҫитрĕм. Ыран кăларса йамалла ҭухне касармăран тухса шăвăнтăм. Латнă прахут ҫинҭе тĕреслекен мĕн пулмарĕ, тытнă пулсан каллех сире курмасăрах хронта каймалла пулаҭҭĕ, тесе калаҫма тапратрĕ Йакку.

Йакку хыткан, анҭах ҫирĕп шăмшаклă етем, вăл пĕр 25 ҫултан иртмен пулĕ, ҫапах та унăн ĕмĕрĕнҭе ҫутă кунсем пулман пирки пит-куҫĕсем тĕксĕм сăнлă, ҫамкине урлă Типҫырма йуппи пек пĕрĕнҭĕк касса каҫнă. Ашшĕпе амăшĕ те ку сăмахсене илтсен пит пăшăрханма пуҫларĕҫ. Ашшĕ, нумай пулмаст̌, халăх ҫинҭе, кантур таврашĕ каласа панине аса илҭĕ. Хыйма Ваҫли — стăршшина — йунашар йалта — Кивпулăхра теҫерттир тытса кайнине каласа тăнлантарнăҭҭĕ.

— «Теҫерттирне касамата илсе кайса хупрăмăр, ашшĕне кантурта ерне тип тыттартăмăр, ĕнине каснана илсе патăмăр, пуринҭен „лайăх кун“ килҭĕ арăмне: уретник паллашрĕ те халĕ пĕрмай сăра ĕҫме ҭупат̌. Унта хăйсен ирĕк — пыл та ҫу пурнăҫ ĕнтĕ салтак арăмне: „салтак арăмĕ сушкка ҫийет, мушик арăмĕ ҫупкă ҫийет“ теҫҫĕ ахаҭтен мар», тесе пĕтерҭĕ Хыйма Ваҫли сăмахне. Унтан тутисене ҫуллантарса кулса илҭĕ, йулашкинҭен йунаса хăварҭĕ.

— Йала хутсăр-мĕнсĕр салтак килет-тĕк, тӳрех кантура йевит тунă пултăр! Атто пĕтĕм ҫала йавăр килĕ, старăстипе теҫетски пуринҭен малтан пĕҭĕк ҭӳреҭелли ăшне пырса ларĕҫ. Теҫерттирĕнне выҭăх-ҭĕрлĕхне шалт пуҫтарса кайăпăр. Пашша саккунне кам хирĕҫ пырат̌, вăл турра кӳрентерет! тесе пăскăртса хăварҭĕ те, пар лашаллă тăрантас ҫине тухса ларҭĕ. Ун хыҫҫăн ăсатма пĕтĕм халăх тухрĕҫ те вăл вара шăнкравсемпе йантратса йалтан тухса кантур йалне уткăнтарҭĕ.

Куҫҫăр Куҫма куҫҫăр пулсан та Хыйма Ваҫлине курса йулнă пекех туйса йулҭĕ. Халĕ вăл ҫав халăх пуххинҭи сăмахсене аса илҭĕ те пит хытă шухăша кайрĕ.

Йаккун амăшĕ ун пек сăмахсене илтнĕ пулин те ывăлне тытса кайасран хăрамаст̌, вăл вăрҫăра ан вилтĕрҭҭĕ, йепле те пулин ҭĕрĕ йултăрҭҭĕ тесе ĕмĕтленет: унăн ахаҭ те пĕр ывăлĕ тыткăна лекнĕ те, халĕ нумай пулмаст̌ унтан ҫыру илҭĕҫ. Хĕрарăм пуҫĕпе вăл пуҫлăхсенҭен те питех хăрамаст̌:

— Е-ех, ҫерелĕ патши, сенĕкпеҭҭĕ хырăмне! Пакарти йăтăнса антăр! Мĕн кирлĕ-ши? Мĕн ҫитмен пуҭ? Ҫын йунĕ шел мар ҫав! тесе йатлаҫат̌.

— Ан ухмахлан, ҭĕлхӳ пирки пуҫна ҫийĕн! тесе ҭарат̌ Куҫма арăмне.

— Анне, хуллен, ун пек сăмахшăн тем курăн, тесе амăшне Йакку та ӳкĕтлет, анҭах хăй ăшĕнҭе патшапа улпутсем ҫине тарăхса ҫилленет.

Иувлă вăрҫă икĕ ҫул ĕнтĕ пырат̌. Хронтра пулман салтак та йулманпа пĕрех: катровăй унтерсемпе штаппри ахвитсерсем кăна пуҫĕсене каҫăртса хуласенҭи урамсенҭе ҫӳреҫҫĕ. Тата йалти пуйансен ывăлĕсем вăрманта тупă урапи хатрисем тумă тесе ҫырăнса йулнă. Пасăр калана Ҫтаппан шăлнĕ те ҫавăнта ҫырнипе йулнă. Тата ҫăмарта хуҫисемпе хăмла хуҫисем — вăрҫă ваҭҭи апатҫимĕҫ хатĕрне тăрататпăр, тесе йулнă. Кусем ҫинҭен Иакку амăшĕ ак мĕн калат̌:

— Ех, Йакку, ĕнтĕ типсе хытса кайатăп пулĕ вăрҫăрах, выҫăллă-тутăллă ҫӳресе! Елĕк Йеххĕм салтак калаҭҭĕ: „Туркка ҫĕрĕнҭе атă сăранне пĕҫерсе ҫирĕмĕр“, тесе. Халĕ те ҫав йевĕрлех пулĕ. Ав, кунта Слихванпа Митри пур — пĕрмай хуткупăс калаҫҫĕ: вăрмантан таврăнаҫҫĕ те хырăмĕсене сăра персе тухаҫҫĕ те тытăнаҫҫĕ урамра вырăсла йурлама. Вĕсем умне хĕрупраҫ пухăнат̌ вара. Ех, мăнтарнă, пĕрисем хур курнă, ҭух теприсем ҫупа-сĕтпе ҫăвăнаҫҫĕ, тесе ӳпкелешет Йакку амăшĕ, хăй аллипе питҫăмартине тĕкелесе. Ҫлихван ҫинҭен асăнсан Йаккăвăн та ҫилли шăнарса килҭĕ. Вăл пĕлтĕр суранпа килсен Ҫлихван унăн Верук йатлă савнине туртса илнине пĕлҭĕ.

— Мĕн пур манăн, атте анне? Нимĕн те ҫук вĕт: пĕр пуҫпа пĕр кут, ҫапах пăшал йăтса танкка ытти салтаксемпе. Салтак выҭăхпа пĕрех ҫав, пĕри ăҫта, теприте ҫавăнта. Ех, пулҭĕ пĕлтĕр хоспитталте пĕр

ҫаваш салтак, вӑт ҫын тӑк ҫын, ҫав ҫырнипе вӗт пирӗн Йӑван та плене карӗ. Вӑл ун патне ҫыру ҫырса паҫӗ, ҫырупе, вуланине пӗлсе, йӑлтах вырӑсла ҫырҫӗ, алпуснине „тыткӑнакай“ тесе ал пусрӗ,— вуласан та ҫухлас ҫук. Вӑл манӑн куҫа та уҫрӗ: «мӗнле те пулсан хронтран хӑтӑлма тӑрӑш, тетҫӗ: патша вӑрҫи пирӗншӗн нимӗн усӑ та парайас ҫук, вӑрҫӑ мар, пастовккӑ кирлӗ, тетҫӗ пӗрехмай, анҫах ӑна ҫасах пирӗн патран уйӑрса карӗҫ, тесе калаҫса ларать Йакку. Вӑл пасӑрах уйранпа кӑмпана ҫисе тӑсатрӗ, ҫапах та сӗтел хушшинҫен, пӗрре канлӗ ларнӑ ҫӗртен, тухмасть.

Калаҫкаласа ларнӑ ҫӗртех вӑл ывӑннипе пуҫне сӗтел ҫине тайрӗ те ҫывӑрса карӗ. Амӑшӗ пӗр майӑх ӑшне типӗ утӑ тултарса кӗҫӗ те ӑна ваҫҫи кутник сакки ҫине вырӑн турӗ. Унтан ӑна вӑратса ҫав вырӑн ҫине выртарҫӗ.

— Мӗнле ыран куна ҫитӗпӗр-ши? Ара, теҫерттир пулать вӗт пирӗн Йакку! тесе куҫанса ларать Куҫҫӑр Куҫма.

— Ан пӗрмай мӑрка-ха, супӑленҫӗк, тупнӑ ыр сӑмах, каҫпа асӑнмалли! тесе ҫарать ӑна карҫӑкки. Унтан иккӗшӗ те урлӑ сак ҫине хытса кайнӑ тӳшеккине сарса выртрӗҫ.

Тулта кӗрхи ҫӗр. Тӗттӗм урамра йытӑсем вӗрни анҫах илтӗнет. Кӑвак-ҫутӑ килме пуҫланӑ кӑна. Автансем ҫунаттисене ҫапса авӑтаҫҫӗ: паллах, уйар кун пулмалла.

Типҫырмана йунатлӑ касак пырса кӗҫӗ: лаши урамри ҫула шаплаттарса пырать. Йулан Ҫлихвансем умӗнҫе ҫарӑнҫӗ те хӑвӑрт калиткӑран шаккарӗ. Ыйхӑллӑ килхуҫи арӑмӗ алӑка тухса уҫрӗ.

— Мӗн пулнӑ ара? Ма пит ир ӑйӑха вӗҫтерсе ҫӳрен, ҫӗрҫури? тет арӑм касака палласа.

— Еҫ, ӗҫ пур! Ҫлихван килте-и? тет касак лашине килкартине ҫавӑрса кӗрсе.

— Мухмӑрла пулас, кӗлет умӗнҫех ҫывӑрать, ав, кайса вӑрат тусна, тесе йелпӗрсе илҫӗ арӑм.

— Ей, инке, сар инке, айта, инке, вӑрмана! тесе ҫӗпӗтсе илҫӗ арӑма касак.

— Кайсам, ҫӗмере, сан алхасас шухӑш ҫеҫ пуҫӑнта, тесе арӑм шур пӳртелле кӗрсе карӗ.

Касак кӗлет умӗнҫе выртакан Ҫлихвана хуллинҫен тытрӗ те мухмӑр ыйхинҫен вӑратрӗ:

— Тӑр, тӑр, ҫасрах, йалта кайӑк пур, есӗр ӑна пӗлместӗр те! тет.

— Мӗн кайӑкӗ, мӗн кӑвак-ҫутлах ҫынсене вӑратса ҫӳрен? Мухмӑр ыйхине те ҫывӑрма памастӑн, тесе сӗртӗнсе тӑрать Ҫлихван.

— Ик уралла кайӑк. Ара Куҫма Йаккӑвӗ теҫерттир пулса киле таврӑннӑ, айта тытма, вара мухмӑр уҫҫи те унтах тупӑн, тет касак мухмӑрлӑ Ҫлихвана.

Ҫлихван ку сӑмаха илтсенех уҫӑлса карӗ:

— Ах, мур, йала йат илтерет вӗт, ҫӗтӗк-ҫатӑк, тесе касакпа пӗр ҫӑварлӑ калаҫать. Унтан сӑран аттине тӑхӑнса йаҫӗ те питне ҫумасӑрах касакпа пӗрле тухса Куҫҫӑр Куҫма патне уттарҫӗҫ. Унтан иккӗш те йӑпшӑнса Йаккусен килалӑкӗпе килне кӗрсе карӗҫ. Куҫма сисмен те вӗсем кӗрсе тӑнине. Арӑмӗ ҫӑмӑл ҫывраканскер, сиксе те тӑҫӗ. Ҫут тӳммеллӗ касака курсанах вӑл сиксех ҫӗтреме пуҫларӗ.

— Пӗтрӗмӗр, Йакку, тӑр, сана тытма килҫӗҫ вӗт! тесе ывӑлне вӑратма тытӑнҫӗ. Йакку ыйӑх тӗлӗшпе:

— Есреллӗ вӑрҫи, вӗлереҫҫӗ, тарӑр, йероплан килет! тесе аспӑсленет.

— Ах, теҫерттир, саншӑн есреллӗ вӑрҫи, есӗ ҫапла патшалӑха сыхлатни?! тесе касак ҫӑрсӑррӑн Йаккӑва туртса вӑратрӗ. Хӑй ҫиллипе ӑна пӗрех айӑккинҫен ҫышса илҫӗ.

Йакку вӑранҫӗ те, касака курсан унӑн куҫ-пуҫӗ ҫаларсах карӗ. Унтан пурпӗр тытрӗҫ тесе ҫухласа илҫӗ те ҫиллине ирӗк паҫӗ:

— Сире лайӑх килте ҫынсене тытса ҫӳреме. Хӑвӑрӑн кайса кураҫҫӗ вут варрине, пӗлӗттӗрҫӗ вара ҫынпа калаҫма! Мӑнтӑр шампасем! тесе харкашать.

— Пурте вӑрҫа кайсан сирӗн пеккисене йалтан хӑвалама кам йулӗ? Ах, таркӑн! Харкашать тата! Пӗтӗм ыр ҫынна намӑс кӳрен, саншӑн пур ҫывӑрмасӑр ҫӳрен, вӑл тата ӳпкелешет! Кам пур сан пек тарса ҫӳрекен? Саккон ҫук пулӗ, тетӗн-и? Кӑтартӑпӑр сана ӑшӑ мунҫа! Пирӗн ҫасах хатӗр. Теҫерттирсемпе мӗн тумаллине пит ҫухлатпӑр кантурта! Есӗр тата мӗн халиҫҫен ним пӗлмен пек ҫӑварсене ҫыртса лартнӑ. Мӗн пур выҫӑхҫӗрлӗхне пуҫтарса илсе тухса кайӑпӑр, тесе ӗрӗхет старикҫем йенелле ҫаврӑнса хайар касак.

— Шивӑ тумланнӑ пултӑр, саккун йаҫӗпе сана арӗслетӗп, тесе илҫӗ Йаккӑва. Унтан сумккинҫен хут туртса кӑларҫӗ те: „Куҫма Йаккӑвӗ Хусанти сывалакансен комантинҫен тарнӑ, шыраса тупса ҫывӑхри ҫар пуҫлӑхӗ патне леҫӗр“, тесе вуласа паҫӗ.

— Саккун тӑрӑх мӑн выҫӑхсене илмелле. Ҫлихван, есӗ поҫаттӑй, мӗнле выҫӑх пур вӗсен? терӗ Ҫлихван ҫине пӑхса.

— Мӗн, вӗсен икӗ сурӑхпа каҫака анҫах пулас, терӗ лешӗ.

— Апла пулсан каҫакине илсе каймалла тӑвас, Йаккӑвӑн ҫӗрне туртса илмелле ҫырас, тесе хӑратма тапратрӗ касак.

— Ах, хӗрхенӗр, ҫӗркаҫ анҫах килсе ҫитрӗ-ҫке! тесе йӑлӑнма тапратрӗҫ Йаккӑвӑн ашшӗпе амӑшӗ те. Унтан иккӗшӗ пӑшӑлтатса илҫӗҫ те Йакку амӑшӗ васкаса кӳрше тухса ҫупрӗ. Пӗр самантра кӳршӗрен витрепе сӑра йӑтса таврӑнҫӗ. Пӳрте кӗрешлӗ пӗр хул хушши шанкӑ та йӑтса кӗҫӗ, ӑна кӑвать вуҫаххине хуҫӗ те сӑрана ӑшӑтма ҫакса та йаҫӗ.

— Ларӑр-ха сӗтел кутнерех, пӑртак сӑра ӗҫтерем, ҫул ҫинҫен ӗҫес килет пулӗ, тесе кускалать.

— Ну, йурӗ сӑру пулсан, ҫӑвар типнӗҫҫӗ, тесе ҫӗртсе йаҫӗ перускӑ, кӑмӑлланнӑ пек пулнӑ касак. Ҫапла ӗҫсе ҫинӗ ҫух «Куҫҫӑр Куҫмана хӗрхенмелле, мӑн выҫӑх - ҫӗрлӗх ҫук, тесе ҫырӑпӑр», тесе лӑплантарса ларать.

Ӗҫсе ҫисен ҫӑнахах та, выҫӑхсене тӗкӗнмерӗ, анҫах Йаккӑва сурӑха ҫаватнӑ пек тытса тухса карӗ. Тытни ҫинҫен хут ҫырҫӗҫ. Ҫлихванпа йалти старастӑна ала пустарҫӗҫ, унтан Йаккӑва касак хӑйӗн лаши умӗнҫен уттарса йал хушшипе илсе тухса карӗ.

Йакку выҫӑллӑ-тутӑллипех, йалти лӑпҫанса ларнӑ пӳртсем ҫине пӑхмасӑр уттарҫӗ.

Йалти шӗвӗр ҫӗлхеллӗ хӗрарӑмсем ӑна пӳрҫӗсенҫен тула тухса пӑхрӗҫ. Урам кукринҫе кӑна тин Йакку ашшӗ ҫурҫӗ йенне ҫаврӑнса пӑхрӗ,— хурланса илҫӗ те куҫшывӗн пӗр тумламӗ кушаланса кайнӑ хыткан пиҫӗ тӑрӑх йухса анҫӗ. Пуҫӗнҫе ҫамрӑк кунсем тӗлӗкри пек пӑтранса иртеҫҫӗ. Ҫырмара выҫани, аҫасемпе тӑм шӑхлиҫӗ калани, ҫулла выртмана кайни — пурте аса килҫӗҫ, анҫах вӗсене вӑрҫӑ пусмӑрӗ ҫӗнтерсе илҫӗ те куҫ умӗнҫе оккопсем лупашкаланса выртни курӑнҫӗ. Хурҫӑ пӑшал сивви, тӑхлан пуҫӑ шӑхӑрни, тупӑ йатри ҫурӑлни—пуҫне пусарса лартрӗҫ те, вӑл хӑй йал ҫӗршывӗ тӑрӑх утнине те манса карӗ...

2.

Хӗл касиҫҫен вӑрҫӑ вутпа йунпа ҫынсене шыва кӳртрӗ. Аманман салтак йулмарӗ. Ӑҫта кирлӗ урасӑр йе хулсӑр ҫӑлах салтаксем кӑна. Пӗтӗм Раҫҫейпе те хресҫен ҫемйисем хушшинҫе салтак паман ҫемйе те йулман темелле: кам суккӑр, урасӑр, йе ҫалӑш, асат хуҫнӑ кӗлеткелли кӑна салтакран ҫӑлӑнса йулҫӗҫ. Йалта тата ҫинлӑ ҫынсем—вӑрҫӑ хатӗрне тума ҫыпҫӑннӑ ҫынсем курӑнкалаҫҫӗ. Хыйма Ваҫлипе Ҫлихван вулӑсра ашкӑнса карӗҫ: вӑрман кастараҫҫӗ, салтак арӑмӗсен тӳписене сута-сута йанравлӑ ӗҫкӗсем тӑваҫҫӗ. Вӗсен йурринӗ пӗтӗм вулӑс ҫынни асӑнаҫ:

Шур ҫип кӗпи тӑхӑнтӑм,
Урам тӑрӑх уттартӑм,
Утрӑм-утрӑм тухаймарӑм,
Тухсан та тухйа тӑхӑнас ҫук.

Пар тур лаша кӳлтертӗм,
Вулӑс тӑрӑх ҫуптартӑм,
Ҫупрӑм-ҫупрӑм тухаймарӑм,
Тухсан та сар хӗр тупас ҫук.

Ай, тур-тур-тур, ыр ҫын пурнӗҫ,
Пар лашапа тухнӑ пек,
Йӗс кӗпер урлӑ каҫнӑ пек,
Ҫумма варли лартнӑ пек.

Ҫапла йалта тӗшӗреҫҫӗ телейлӗ ҫынсем. Выҫӑллӑтутӑллӑ пурӑнан салтак арӑмӗсем ирӗксӗрех вӗсен аллинҫе: вӗт пур посопи те, салтак пенҫи те вӗсем урлӑ килет.

Анҫах хӗл варринҫе Питӗрте, Мускаврa выҫлӑх ӗҫҫыннине хытӑ пусмӑрласа ҫитерҫӗ. Ӑҫта кирлӗ пӑлхавсем, пастовккӑсем тапранҫӗҫ. Питӗрти ҫи паха, шанҫӑклӑ полккӑсем вӑрҫа хирӗҫ калаҫма тытӑнҫӗҫ. Патшалӑх пуххи те шикленсе ҫитнипе вӑрҫӑ халапне хаҫатсем ҫине ҫапмасӑр сӳтсе йавма тапратрӗ.

Кӗҫ-вӗҫ, патшана сирпӗтсе те антарҫӗҫ. Пӗтӗм Раҫҫейри ӗҫҫынни ирӗккӗн ҫӑмӑллӑн сывласа йаҫӗ. Вӑрҫӑ кӗҫ ҫарӑнаҫ, кӗҫ мир пулмалла, тесе калаҫма пуҫларӗҫ. Анҫах Керӗнскипе унӑн тӳрешари: «Тартанела илмелле, сойусниксене пулӑшмалла! Вӑрҫа сӗнтерӳллӗ пӗтермелле!» тесе кӑҫкӑраҫ. Пур сотсиалис суйеҫсем хаҫатсем урлӑ, мӑн хула урамӗсенҫе миттӗнксем туса вӑрҫма ҫӗнеҫҫӗ, касармӑри салтаксене хронта кайма хӗтӗртеҫҫӗ.

„Пӗрремӗш прикас“ тухнӑран кайран салтаксем охвитсерсене „коспотин охвитсер“ тесе ҫӗннипе охвитсерсем шӑлсене ҫыртса анҫах килӗшеҫҫӗ.

„Тистсиплинӑ пӗтрӗ, Раҫҫейе ҫемҫӗк хуппи айне турӗҫ!“ тесе улах кукӑрсенҫе кӑшкӑрса ҫӳреҫҫӗ вӗсем. Хронтра Керӗнски «аслӑ комантушҫи» вырӑнне «аслӑ ӳкӗтлекен» йатне илтрӗ. Итлекен салтак полккисем сахалланнӑ ҫемӗн сахалланаҫҫӗ.

Пирӗн Куҫма Йаккӑвӗ патшана сирпӗтнӗ вӑхӑтра варвиттипе Каменетс-Потоҫски хоспитталӗнҫе выртнӑ: вӑл йунлӑ варвиттипе ҫирленӗ. Хоспитталте ҫапах та уншӑн хронтринҫен лайӑхрах пулнӑ: кунта тата унпа йунашарти пӳлӗмре икӗ хутла лайӑх пӗлекен ҫӑвашсем пулнӑ. Вӗсем ӑна хаҫатсем вуласа хаҫхи самана ҫинҫен тӑнлантарнӑ.

— Вӑрҫа каплипех пӗтерме йурамаҫ. Тӑшмансене ҫӗмӗрсе лапҫӑтас пулаҫ. Пирӗн сойуҫниксемпе алла алӑн пымасан епӗр тӗнҫе мӑшкӑлӗ пулатпӑр, тенӗ вӗсем. Хӑйсем пек «пушӑт ҫӗллиллӗ» (нашшивкӑ) салтаксемпе пӗрлешсе вырӑсла та лайӑх ҫаптарнӑ.

— Тартанела туртса илмесен пирӗн Раҫҫей хӗвеланӗҫ йенҫи патшалӑхсемпе йепле суту-илӳ тӑвас? тесе пӗтерме йуратнӑ кашнӑ ҫанпек халапрах.

— Мӗн вӑл Тартанел? тесе ыйтнӑ Йакку.

— Ара, Хура тинӗспе Ҫӗрварринҫи тинӗсе пӗрлештерекен пырша—тинӗс пырши, тесе тӑнлантарнӑ лешсем.

— Мӗне кирлӗ пире тинӗс пырши? Хамӑр пырша сыв пултӑрҫҫӗ! тесе мӑшкӑланӑ Йакку.

— Есӗ политтӗк тӗлӗшпе нимӗн те пӗлместӗн. Ахаҫ мар ҫав хутла пӗлмен пирки ҫӗтӗк-ҫатӑк ҫӳрен, тенӗ вара лешсем кӑмӑлсӑр пулса.

Ҫапла вӗсен акитатси Йаккӑвӑн ӑсне улӑштарайман. Йакку, хронтра пайтӑх нуша курнӑскер, хоспитталте вӑрҫа, йунлӑ самана сийенне пушшах курса вӑрҫӑран писнӗ. Кунта суранлӑ салтаксене тохтӑрсем урисене татса „кӗске“ ҫынсем туни унӑн ӑшҫиккине пит ҫавӑрттарнӑ. Ун ҫумӗнҫе тепӗр пӳлӗмре «хирурки хӑватне» курса тухнисем хӑйсен пурнӑҫне, ҫуралнӑ кунӗсене ылханса выртакансем шӑкӑрттинех выртнӑ. Вӗсем ахлатни хӑш ҫух ӑна ҫывӑрма та паман.

— Ай, пӗтрӗм, ан касӑр, ҫаплах пурӑнам, луҫҫӑ ҫӗрсе кайса вилем! тесе кӑҫкӑрнисем ӑна илтӗнкеленӗ. Кӑна урасӑр йулнисем йӑвӑр ыйӑхра асписленсе каласса выртнӑ.

— Ак вӑл тинӗс пырши мӗн кӑтартаҫ, тесе хӑй ӑсӗпе ҫухласа выртнӑ Йакку.

Пуринҫен ытла иккӗмӗш пӳлӗмрисем вилӗме кӗретӗн кӗтсе илни унӑн пуҫ тӑнне ҫулпа пуснӑ пек хуплӑнӑ. Унта «столпҫак» ҫирӗпе ҫирленисем выртнӑ. Вӑл ҫиртен нимле тохтӑр та нийепле емел те сыватма пултарайман. Хвершшӑлсем каланинҫен вӑл ҫир йепле ҫынна йернине Йакку лайӑх пӗлсе ҫитнӗ.

Вӑл ҫир салтаксене оккопра нӳрӗ ҫӗрте йернине пӗре ӑна хвершшӑл каласа панӑ. Столпҫак ҫирӗн хурҫӗсем суран вырӑна лексен етемӗн ҫурӑм шӑмми нимине кӗреҫҫӗ те ҫын вара пӗҫӗккӗнех, ӑсне-тӑнне ҫухатмасӑрах, вилӗм патне ҫывхараҫ те асапланса вилет.

Столпҫакпа ҫирленӗ пӗр салтак ҫапла хоспитталте выртнӑ ҫух вилессине пӗлнӗ те арӑмӗ патне „вилеҫҫен килсе кур“ тесе телекрам йанӑ. Арӑмӗ пилӗк кунтан хоспиттале ҫитнӗ. Упӑшки вӑл вӑхӑтра алли-урине шӑнӑр туртма пуҫланипе аптраса выртнӑ, анҫах калаҫма пултарнӑ.

Арӑмӗ ҫитнӗ кун вӑл унпала тӑнлах калаҫнӑ, анҫах тепӗр кунне калаҫнӑ ҫух ҫӗлхине шӑлӗсемпе, шӑнӑр туртнӑ пирки, ҫырта-ҫырта ларткаланӑ. Арӑмӗ упӑшки йури ун пек ҫыртаҫ пулӗ тесе шутланӑ. Ӑна ӑнлантаракан пулман,—тистсиплинӑ хушман.

Икӗ кунтан упӑшки хуҫкаланса, тем пек асап курса ун умӗнҫех вилсе выртнӑ.

Арӑмӗ упӑшкине пит йуратнипе виллине ҫуптӑвасшӑн пулнӑ, аран хоспиттаҫ натҫираттӗлӗсем ӑна упӑшки вилли ҫумӗнҫен уйӑрса илнӗ. Касҫен арӑм ухмаха йерсе кайнӑ.

Ак мӗнле карттинсем Йакку курса выртнӑ. Ҫавӑнпа уншӑн ҫӑваш салтакӗсем акитатси туни пуш параппан вырӑнне анҫах пулнӑ.

Лешсем унпала нумай пӗрле выртайман: „ҫут ҫамкасем“ вӑрҫӑ шӑршине йуратакансем пулнӑ, ҫавӑнпа сывалнӑ сывалман «утарнӑй паттаҫйона» ҫырӑнса Тарнопполь йеснелле Каменетсӑран тухса кайнӑ.

Йакку сывалса тухсан еттапнӑй коментант патне лекнӗ. Кунта теҫерттирсем пит нумай пулнӑ. Вӗсене урама та кеоркиллӗ кавалерсем илсе ҫӳренӗ. Ниҫта пурӑнма та ирӗк паман, ҫапах та еттапнӑй комантӑран

ешшалон хронта тухса кайнă ђух, çуркунне йур ирĕлнĕ пекех, сайралса ђакса пынă. Иаккăва та теçерттир шутĕнђех усранă. Вăл уншăн пĕртте пăшăрханман: теçерттирсем хушшинђе ђи маттур та саттур етемсем пулнă. Вĕсем вăрçа „ђĕрĕ тамăк" анђах тенĕ.

Нумайăшĕ вăрçăран кулса хронтран тăрăхласа:

«Нас не товесут,
Масуриком просовут,
Вакон растраçотça,
Теçерттир спаçотça»,

тесе йурланă. Ку йурă Йаккăва кăмăлне пит кайнă. Нумай та вăл Каменетсăра пурнайман: вĕсен ешшалонне фронта каймалла тунă. Вĕсене вăрçа тухса кайас умĕн ӳкĕтлеме пĕр полкковник пынă. Вăл нумайђен салтакăн тистсиплини çинђен, хăй çуралнă çĕршывĕ хутне кĕресси çинђен, вăхăтлăх тӳрешарана панă прицăкă çинђен каласнă, йула вкинђен: „турă леш тĕнђере прицăкăна улăштаракана хытă айăплаĭ", тесе пĕтернĕ.

Ку сăмаха каласа пĕтернĕ пĕтермен пĕр салтак полкковник умне тухса тăђĕ те:

— Йулташсем, çак полкковник мапа Шиттомĕрте роскăпа çаптарттарђĕ; ун ђух вăл Никколай Никколайђђăн аĭӳтанђĕ пулсађђĕ, халĕ турăпа хăратаĭ, шуйтан кĕвенти! Персе ангарăр йна! тесе кăçкăрђĕ.

Пĕтĕм салтак пăлханса карĕç, анђах винтовккисем алăра çукки хупларĕ (вăл вăхăтра етгапнăй комантăран хронта кайакан ешшалонсене винтовккă хронта çитмесĕр алла паман).

Полкковнике ђугах ђĕрсе тăкађђĕç, лайăх, ун телейне, кеорки кавалерĕсем çăлђĕç. Ну уншăн вара комантăна алла илђĕç: кашни теçерттир пуçне пĕрер кеорки кавалерĕ сыхласа хуларан илсе тухса карĕç. Çапах та пĕр стантсăран Йакку полкковнике пăскăртакан салтакпа ешшалонтан татăлса йулђĕç.

Ирĕкĕн-мĕнĕн, курăннă-курăнман пулкаласа, каллех Каменетса персе çитрĕç. Кунта «Романски сат» текен пахђара картла выђакан салтаксене çыпăçрĕç. Йаккун укçа çук, анђах уншăн ал-ура тĕреклĕ, ыйăх çăмăл. Сатра картла выђакансене çурта тытса тăраканĕ кирлĕ, кăвас патне ђупаканĕ кирлĕ. Йаккушăн ку ĕç — шăл çемми.

Пирĕн Йакку ирђђен укçаллă çын пулса та тăђĕ. Хăй ођкона ђухлаканскер „ођко!" тесе анђах çаптараĭ.

Йулташĕ—Путилĕн йатлă Ђĕмпĕр ађи пĕрмай карта шатлаттараĭ: йнаĭ теçерттирсен пурнăçĕ. Хырăмсем хыр тăрринђен анаççĕ: апат укçапа пур, анђах сата хăш ђух ухтараççĕ, çав кăна пăртак кансĕрлет.

Хăйуллă çыншăн вăл та нимех те мар. Путилĕн картла выђанă ђух пит хăйуллă салтаксемпе паллашрĕ, лешсем йна хăйсем патне ђĕнеççĕ. Путилĕн хăйпе пĕрле Йаккăва та илсе кайаĭ.

Улшăнаĭ Йаккăвăн çакăнтан кайран пурнăç йĕрки. Ăçта салтаксен пухăвĕ — вăл унта. Ăçта миттĕнк — вăл çитнĕ. Вăрçă тымарĕ, вăрçă камшăн усăлли—ывăç тупанĕнђе пек курăнакан пулђĕ уншăн. Вăл хĕвел-анăçĕнђи хронтри салтак тепутађĕсен пĕрремĕш сйесне те кайса курђĕ. «Килĕшӳ, киле саланасси, çĕнĕ йĕркесене пурнăçа кӳртесси» пăхăнтарса илђĕç ун пуç-тăнне. Каçхине вырттсан та пуç мимийĕ ĕçлеме ђарăнмасĭ. Йала таврăнсан та çĕр хĕсĕк пирки пурнăçа йусасах йарас çук, хапрăка Путилĕн йулташпа кайасђĕ, тесе вырттаĭ.

Пĕре Путилĕн йна Романски сат вĕçне йертсе карĕ. Унта кавраçпа çирен тĕмисем хушшинђе вĕсем пынă çĕре пĕр 15 салтак пухăннă.

— „Петрократ", терĕ вĕсенђен пĕри.

— „Прорыв", терĕ хирĕç Путилĕн.

Кусене ним ђармасăр йышăнђĕç. Тата салтаксем килкелерĕç. Кусене те «Петрократ» тесе тĕрĕсле-тĕрĕсле кӳртрĕç. Хирĕç вĕсем те «Прорыв» тесе хăйсене паллаштарђĕç. Иакку кунта вăрттăн канашлу пуласçине туйса илђĕ, пайанхи пароле те пĕлђĕ.

Пĕр 20 салтак пухăнсан парођ каласа хирĕç кĕтсе илекен салтак ыттисен варрине тăђĕ те кĕскен:

— Йулташсем, пирĕн вăхăт çитрĕ. Кунта хронт хыçĕнђе ĕçленипех ĕç пулса пĕтеймест.

Хронтра 18-мĕш ийунђте йепле охвитсерсем тăрăшса ийуђски полккăсем тунине сиртен пурте илтнĕ пулмалла. Вĕсем сойуçниксене улăштарма йурамасĭ, теççĕ, хамăран мул хуçисемшĕн. вĕсен капиталĕшĕн тăрмашççĕ. Вĕсем хыçĕнђен тĕттĕм салтаксем те тăнĕсене çухатса австрипе пимĕç салтаксемпе вилмелле çапăçаççĕ. Камсем вĕсем нимĕçпе австри çарĕнђи салтаксем? Пирĕн пекех тар-шур курса пурнакан хапрăк-савăтпа хура çĕр çыннисем! Пуйансем, пуршуйсем, хапрăк хуçисем — вĕсем оккопсенђе пуђă кĕтсе лармаççĕ. Вĕсем хыçалта вăрçă тупăшне хисепе кӳрсе ђиркӳсенђе молепĕнсем тăваççĕ.

Пăрахас пулаĭ çав маротерсемшĕн йун тăкма. Пирĕн хамăра хирĕç «тăшмансем» текен йут çар салтакĕсемпе «тăванлашас» пулаĭ. Кунта пирĕн хушăра нимĕçле пĕлекенсем те пур. Пурĕн те ыран-пайанах хронта кайма çырăнса ешшалонсемпе тухса каймалла. Тарнопоđ таврашĕнђи уђасткăна нумайтарах саланăр: унта сире кĕтекен йулташсем те пур. Кам вăрçа ђасрах ђарас тет, вăл ыранах хронта тухса кайса унта тăванлашма тытăнтăр!

Çапла-и, йулташсем?

— Çапла, итлетпĕр, тăванлашасси— пирĕн ђи кирлĕ ĕç, тесе килĕшрĕç пурте.

Унтан кашни хăйĕн каймалли ђаçне çырса илђĕç те пĕрерĕн-икшерĕн хуланалла саланђĕç. Пруççилăв* творетсă патĕнђен иртсе пынă ђух Путилĕн Иаккăва хулĕнђен пĕрех ђĕпĕтрĕ:

— Асту, ђĕлхесĕр пул, малти пирĕн алăра! терĕ.

Ку сăмахсем Йаккăва пушшех тĕрек пађĕç. Вăл вăрçă пуçланнăранпа та кун пек хăйне лайăх туйман. Тĕнђере епĕ те кирлĕ ĕç тума тивĕç илтĕм-çке, тесе вăл çăмăллăн еттапнăй комендант патне кĕрсе кайрĕ.

1917-мĕш çулăн ийуђ уйăхĕн 1-мĕшĕнђе вăл Тарнопоđ умĕнђи хронта, 18-мĕш ийуђри наступлени йаđĕпе хисепленекен полкка çитрĕ. Вăл полккăра кеорки кавалерĕсем тата унтер паконĕллĕ салтаксем йна нумайăн пек курăннă. Куçма Йаккăвĕ «ку ђăнахах-ши», тесе йури полккăра салтаксемпе калаçса пăхнă. Вĕсем хушшинђе ђăвашсем те ђылай пулнă.

— Пулђђăр-иç,—тенĕ лешсем,—вĕсем кунта анђах хĕресĕсене çутăлтарса çӳреççĕ; оккопа пырса та курăнмаççĕ, теме йураĭ. Çитет пире, ийуђĕн 18-мĕш ђислинђе те пит нумай суран куртăмăр, тесе ӳкĕнсе каласнă вĕсем.

— Капла кунта ăссем хатĕр-иç, тесе йанă Йакку.

— Хатĕр, хатĕр, наступлени йевит туђђăр анђах, кăтартăпăр наступлени, тенĕ салтаксем.

— Паллашас пулаĭ, тăванлашма кирлĕ „тăшманпа" —вара вăрçăн шăрши те йулмĕ, тет Иакку Каменетсри акитаттăр сăмахне астуса, хăй майлă çавăрса хурса.

---

* Хĕвел-анăçпе кăнтăр хушшинђи çарсен клавнăй комантуйушђи.

— Епӗр те ҫавнах шутлатпӑр, кунта пире пӗр йеврейлӗскер ӑнлантарҫӗ-ха, тет ҫумра ларакан салтак.
Йакку вара йулташсене тӳпрӑм тесе йеврейлӗ салтак патне уттарҫӗ. Вӑл унпала Каменетсӑран килсенех ҫыру парса паллашнӑҫҫӗ.
Тепӗр кун салтаксем пурте пекех оккопсене кайса лӑпҫӑнҫӗҫ: ҫумӑр килес умӗнхи ҫах-ҫеп ҫӳрисем пекех.
— Наступлени пулмалла! тесе пӑшӑлтатаҫҫӗ нумайӑшӗ.
— Ыран ирхине пуҫланаӗ, Австрийана пулӑшасшӑн нимӗҫ ҫарне кунта куҫараӗ, тесе пӗлтереҫҫӗ расветкӑрисем.
„Тӑванлашатпӑр!" текен оккопсенҫе ҫӳрри ытла. «Ҫитет пуҫӑсем ҫӗтма!» теҫҫӗ пӑшатан пек, виҫкӗн салтаксем. Унтан каллех лӑпланаҫҫӗ.
Каҫалапа Йакку похотнӑй сумккӑ тулли листовккӑ тултарса оккопа ҫитрӗ. Ҫырассине вырӑсла та, нимӗҫле те, руҫҫила та ҫырнӑ.
Вирлӗ, ҫуна тивертмелле сӑмахсем:

«Тӑвансем! Епӗр те есӗр те ултав тыткӑнӗнҫе, пирӗн пуҫлӑхсем пире пусма илсе кайнӑ вӑкӑрсем пек анҫах шутлаҫҫӗ. Пирӗн йунпа вилесем вӗсемшӗн, вӗсем анисемшӗн кӑна тислӗк пулаҫҫӗ. Пӑрахӑр вӑрҫма, пӑрахӑр пӗр-пӗрине цеме! Ҫарӑнӑр вӗлерме!
Килӗшӳ, пӗрлешӳ. Вӑрҫӑн вӗҫӗ ҫав пултӑр!»

Йакку ним хӑрамасӑр оккоп тӑрӑх листовккӑ салатаӗ; пӗр траншейрен тепӗр траншейе куҫаӗ, унтан австрийак оккопӗсем патне йӑпшӑнса кайса килет.
Уншӑн пайан ҫаплӑ каҫ.
Куҫӗсем хавасланнипе вут пек ҫунаҫҫӗ. Йанаххи мала тухса кайнӑ та ҫӗлхи вырӑнне калаҫма пуҫлассӑн тухйанаӗ. Вайлӑ шухӑш пӗтӗм сӑн-сӑпатне ҫапнӑ.
Тӗнҫери ӗҫҫыннисемшӗн вӑл кӗҫӗр пысӑк ӗҫ тӑваӗ. Тӗнҫери революци урапин пӑтисене тытса тӑракан винттӑ вырӑнне хурса вӑл хӑйне хӑй савӑнаӗ.
Вӑрҫӑран тарса пурӑннӑскер вӑл пайанхи каҫ вӑрҫӑри тӑшмансен оккопӗсем умӗнҫе хӗпӗртесе хырӑм тӑрӑх шывса ҫӳрет. Вӗҫтерет кӑна листовккӑсене. Наступлени ваҫҫи „минӑ" лартса тухрӗ. Листовккӑсене салатса пӗтерет те хӑйӗн Ҫовӑ (йеврейлӗ салтак) патне оккопран тухса вӗҫтерет. Ирҫҫен тата листовккӑсем илсе килсе салатас, тет.
Анҫах тул ҫутӑлнипе ҫаплӑ 3-мӗш ийуҫӗн кунне прӗкӗн кураймарӗ вӑл. Ҫовӑпа иккӗшне те вӗсене листовккӑсене салатма кайнӑ ҫух тытнӑ та Тарнопполҫ тӗрмине илсе кайса хупнӑ.
Уншӑн вӗсем салатнӑ листовккӑсем хӑйсен ӗҫне турӗҫ.
Ир пулнӑ пулман «наступлени» прикасӗ тухрӗ, анҫах наступлени вырӑнне хире-хирӗҫ оккопри «тӑшмансем» „тӑванлашма" тытӑнҫӗҫ: савӑнса, пӗр-пӗрин патне кӳрше кайнӑ пек ҫӳреме пуҫларӗ.
Ҫапах та ӗҫ йалтах ӑнса ҫитмен пулнӑ иккен: артиллериссем икӗ йенҫен те хытӑ ҫӗмӗрме тапратрӗҫ те тӗнҫе пӑтранса карӗ.
Вырӑс ҫарӗ, малтантарах тӑна кӗнӗскер, хӑвӑрт пӗр шухӑшласа тӑмасӑр ҫакма тапратрӗ.
Тупӑсене, пӑшалсене, ҫар хатрисене, опоссене, кухҫӑсене пӑраха-пӑраха ҫупаҫҫӗ. Утлӑ ҫарсем ҫуран ҫартисене таптаҫҫӗ. Касаксемпе кеорки кавалерӗсем ҫакакансене хамӑр ҫар халӑхне пулеметпе персе, курӑк ҫулнӑ пек ҫулса тӑкаҫҫӗ. Йун пӑсӗ тӗтреленсе тӑрса тусанпа хутӑшса сывӑ ҫынсен пырӗсене сывлайми тӑваӗ.
Ӗсӗклесе ӳлекен, макракан, вӑрҫӑна ылханакансен сассисем лашасем хартлатнипе тупӑсем йантранипе хутшӑнса кайса хӑлхана йӳҫӗтеҫҫӗ.
Ҫапах та Раҫҫей ҫарӗшӗн империалисӑм вӑрҫинҫе ку йулашки хӑрушӑ ҫапӑҫу пулса тӑҫӗ.
Йунлӑ саманан йулашки «ҫаплӑ уйавӗ» Раҫҫейре ҫак кун пулса иртрӗ.
Историре ку вӑрҫӑ сыпӑкӗ «Тарнопполҫти прорыв» йатлӑ пулса ҫырӑнҫӗ.

◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆◆

## ЕСРЕЛ СӐВВИСЕМ

### КОМСОМОЛ МАРШӖ.

Айта, васка, ӗҫ ывлӗ, малалла,
Йертсе ӗҫ хӗрне те хӑвпа пӗрле.
Пуҫна ҫӳле ҫӗкле, хытар алла,
Умри тумхахсене ват, тӗкӗрле.

Пире ҫӗнет килне ирхи хӗвел,
Йӑвӑрлӑха ҫӗнсен килне ҫӗнет.
Пытанас мар йӑвӑрлӑхран хӗве,
Йӑвӑрлӑха пӑвма тытар ҫӗне.

Аса илӗр ак иртнӗ ҫулсене,
Кам та пулин пытаннӑ-ши ӗҫрен?
Пытанманне пӗлеҫҫӗ вӗсене,
Пуҫ хывнине пӗлеҫҫӗ-ҫке хӗҫрен.

Тата тахҫанхине илер аса,
Йун ӗмнине пиртен улпут-хуҫа.
Тӑкӑннӑ ҫийелтен хӗнхур, асап,
Нушта киревсӗр хӑртнӑ пит-куҫа.

Ҫак нуштарах туптарӑмӑр шӑла,
Вунҫиҫҫӗмӗш ҫулта йытта ҫурма.
Ҫак нуштарах шӑратнӑ кӑшӑла,
Нушта пуҫне хӗссе тума йурма.

Хаҫ те ҫакна асра тытса пурне,
Тата хытрах тытар ал-урана.
Пире тӗртме шиклентӗр йут пӳрне,
Сухапуҫне лартма хӑратӑр йӑрана.

Ҫасах иртен хӗрелӗ ҫур тӗнҫе,
Ҫасах пиртен йӑлӑнӗҫ пулӑшу,
Ҫасах Советӑн хӗрлӗ ҫуртӗнҫе
Ҫӗре ыталӗ хӗрлӗ апашур.

Айта, васка, ӗҫ ывлӗ, малалла,
Йертсе ӗҫ хӗрне те хӑвпа пӗрле.
Пуҫна ҫӳле ҫӗкле, хытар алла,
Умри тумхахсене ват, тӗкӗрле!..

## ӖҪЛӖ ИР.

Ирхине, сехет ҫапсассӑн саккӑр,
Еп тухатӑп ҫӗнӗ стройккӑна.
Каҫҫенех ӗҫлетӗп питӗ паттӑр,
Ӳт-пӳрен вӗри ҫапаӗ кӑна.
Пӗҫҫен мар еп, пӗҫҫен мар, нумайӑн,
Ҫӗнӗ ҫурт сахал ҫынпа пулмаӗ.
Пӗлӗте ҫӗнетпӗр акӑ майӑн,
Пӗлӗте касаӗ петтон — алмас.
Сар хӗвел ӗҫе йурасшӗн пулӗ,
Пӗшкӗнсе илет хӗрле ташша.
Вай хӑватлӑ хапрӑк-савӑт тулӗ
Йӑхӑраӗ ӗҫе пур йулташа.
Хурҫӑпа петтон пӗрле илетпӗр,
Шӑратса йаратпӑр ҫуртсене.
Кунран кун пуласса тӗллетпӗр,
Кунран кун вӑхӑт ырра сӗнет.
Каҫпала, сехет ҫапсассӑн пиллӗк,
Таврӑнатӑп лӑпкӑ пӳлӗме.
Тӳрленсе, каллех хытсассӑн пилӗк,
Ҫитес кун хастаррӑн ӗҫлеме!..

# АТӐЛ ҪИНЂЕ.

Кĕмĕл сăнлă Атăл
Ҫуталаҭ умра.
Ђăсма епĕ хапăл
Ун ҫинђен йурра.

Ахађ мар-тăр епĕр,
Епĕр — сăвăҫсем
Ун ҫинђен тĕрлетпĕр
Йанкăс сăвăсем?

Акă хурҫă пулă
Атăла туллаҭ;
Ун хыҫĕнђен сулă
Хумсене ҫуллаҭ.

Сулă ҫинђе йурă —
«Ой, ешшо та рас!»
Хĕрӳ ĕҫри йурă —
«Ой, ешшо та рас!»

Халтăр йурă ђупрĕ
Хумлăн йăлăма —
«Ой, ешшо та рас!»
Йăлăм алă ҫупрĕ,
Саврĕ сулăна —
«Ой, ешшо та рас!

Сулăран ҫĕкленĕ
Ҫĕнĕ пысăк ҫурт.
Ой, ешшо та рас!
Пĕлĕтре тĕлленĕ
Хĕрĕх хутлă пӳрт.
Ой, ешшо та рас!..»
. . . . . . . . .

Пуплесемђĕ, Атăл,
Манпа хумупа...
Ҫулупа ес — ватă,
Ҫĕнĕ — тумупа.

Асаилтĕм кĕвĕ
Сан ҫинђен пайан:
Санăн ђапу ĕлĕк
Пулнă мĕн — пуйан...

Есĕ ирĕк панă
Раҫĕн Ҫтаппанне
Хывайманкăн панăн*
Пурҫăн сăкманне...

Панăн пĕр сăкманĕ
«Ахалех» пулман:
Уншăн халăх панă
Ҫĕраллă сăкман...

Темђул асап тӳснĕ
Халăх унђухне.
Панăн ĕнси ӳснĕ
Йут ĕнсе ҫинђех.

* Пан — урăхла улпут теме пулаҭ.



Ҫавăнпа, тен, Атăл,
Есĕ ђăтаймаи:
Ђĕнсе илнĕ хапăл
Тонран атаман.

Ђуллă Тон хусахĕ
Пулнă ђул пекех.
Халăха ун сасĕ
Йăхăрнă текех.

— «Халăх,
Тек ан тĕлĕр,
Вăран ыйхăран!
Ҫапăҫăр!
Ей, килĕр!
Таптăр хĕн-хура!..»

— «Ирĕк пултăр!» тенĕ
Халăх, — «Ҫĕр ҫинђе!»
Харăс пуҫ ҫĕкленĕ
Раҫĕн хыҫĕнђен...

. . . . . . . . .
. . . . . . . . .

Икĕ ĕмĕр иртрĕ
Атăл ђĕрҫинђе —
Халăх йурă илтрĕ
Ҫтаппансем ҫинђен.

Икĕ ĕмĕр йухрĕ
Атăл тар-йунпа;
Йăлăм пуҫа усрĕ
Пăнтăхнă тумпа.

Ҫапах алăк уҫрĕ
Танлăх ирĕке,
Икĕ ĕмĕр хыҫҫăн —
Йунлă кĕреке.

Пайан Атăл тăрă,
Пĕлĕт пек, таса;
Ав сулă ун тăрăх
Ҫĕн кĕвве ђăсаҭ...

— «Сулăран ҫĕкленĕ
Ҫĕнĕ пысăк ҫурт.
Ой, ешшо та рас!

Тӳпере тĕлленĕ
Хĕрĕх хутлă пӳрт.
Ой, ешшо та рас!..»

Васкасах ав сулă
Хумсене ҫуллаҭ;
Ана йешĕл йăлăм
Кăтрипе суллаҭ...

Ой, Атăлăм, Атăл,
Йухах ес пĕрмай!
Сан ҫинђен еп хапăл
Йурă йурлама.

# ЙАЛПА ХУЛА СОТСИ




## ЛЕНИН СОТСИАЛИСӐМЛА ӐМӐРТУ

Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑрту пирки Ленин вунпӗр ҫул кайаллах ҫапла ҫырса хӑварнӑ:

«Сотсиалисӑм ӑмӑртӑва сӳнтерсе лартма мар, ӗна вађђи, унпала ђӑннипех усӑ курмашкӑн, сарлака ҫул уҫса парат̆, ӑмӑртуллӑ ӗҫе ӗҫҫыннисен пысӑк пайне хутшӑнтарма пулӑшат̆, унта вара вӗсем хӑйсен ӑспуҫне палӑртма, ӑсталӑхне кӑтартма пултараҫҫӗ, унашкал ҫынсем халӑх хушшинђе темӗн ђухлех, вӗсене капиталисӑм пинӗпе, мӗлйунӗпе путарса пынӑ.

Хађ, влаҫ сотсиалисӑмла правиттӗлствӑ аллинђе ђухне, ҫав ӑмӑртӑва орканисатсилесси пирӗн сатађ пулса тӑрат̆.

Ӗҫлекенсемпе хресђенсем, ӗҫҫыннисемпе експлоататси тӳсе пурнакансем! Ҫӗр, панксем, хапрӑк-савӑтсем пӗтӗмпех халӑх аллине куҫрӗҫ. Хӑвӑрах происвотствӑпа йапаласене валеҫес ӗҫе астуса, шута (хисепе) илсе пырӑр,— ҫак ҫулпа кайсан анђах сотсиалисӑм ҫӗнтерме пултарат̆, ҫак ҫулпа кайсан анђах епӗр тӗрлӗрен експлоататсийе, нушталӑха, ђухӑнлӑха пӗтерме пултарӑпӑр. Мӗншӗн тесен Раҫҫейре ҫӑкӑр, тимӗр, вӑрман, ҫӑм, ҫӗрмамӑк, йӗтӗн пурне вађђи те ҫитет, вӗсене тӗрӗс валеҫме те, тӗрӗс ӗҫлеме анђах пӗлес пулат̆, анђах халӑх тӑшманӗсене, пуйансене, халӑх ӗҫӗпе усӑ курма тӑрӑшакансене, шулӗксене, хуликансене политтӗкре ҫеҫ мар, кулленхи екkономиллӗ пурнӑҫра та ҫӗнтерес пулат̆.

Ҫавӑнпа ҫав уђђотпа контроља (ӗҫе хисепе илессипе асӑрхассине) пурне те ӑнланмалла орканисатсилес тесен, кашни тӑрӑ ӑспуҫлӑ ӗҫлекенпе хресђенех ӑнланмалла пултӑр тесен, вӗсене хӑйсене ҫак ӗҫе хутшӑнтарса, вӗсен ӑсхакӑлне вӑратса йамалла, ҫавӑнпа пӗтӗм патшалӑхӗпе ӑмӑртӑва тапратса йӗркелесе йамалла.

Кашни комунӑ, кирек-хӑш хапрӑк, кирек-хӑш йал, кирек-хӑш потрепиттӗл ушкӑнӗ, кирек-хӑш комиттет та — пӗр-пӗринпе ӑмӑртӑва тӑмалла тӑвас пулат̆.

Акӑ мӗнле ыйтусем ҫинђе сарӑлса каймалла ӑмӑрту. Ҫакӑн пек ӗҫре ӗнтӗ талантсем пурнӑҫра ӗҫпе палӑрса, ҫӳлелле хӑпарса пырса патшалӑха йертсе пырас ӗҫе хутшӑнса пымалла. Талантлӑ ҫынсем халӑхра нумай вӗсем. Анђах вӗсем путӑнса ларнӑ. Вӗсене сарӑлмашкӑн ирӗк парас пулат̆. Вӗсем, вӗсем кӑна, массӑсем пулӑшса пынипе, Раҫҫейе ҫӑлма, сотсиалисӑм тӑвас ӗҫе хӑтарма пултараҫҫӗ». Ҫапла ҫырнӑ Ленин йулташ сотсиалисӑмла ӑмӑрту тӑвас пирки. Хађ ӗнтӗ Ленин каласа хӑварнисем пурнӑҫа кӗрсех пыраҫҫӗ. Ӗҫле-

# АЛИСӐМЛА ӐМӐРТУРА





## ÇИНЂЕН МӖН КАЛАСА ХӐВАРНӐ.

кенсемпе хресђенсем Совет Сойусӗн пур кӗтессисенђе те сотсиалисӑмла ӑмӑрту ӗçне хӗрӳллӗн тытӑнђӗç. Хађхи вӑхӑтра ӑмӑрту темиçе тӗрлӗ майсемпе те пулса пырай. Ӗçхалӑх массисенђе халиђђен пытанса тӑнӑ вӑй ӑмӑртура хӑватлӑн хусканса кайрӗ.

Сотсиалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнса ӗçлекенсем халиђђен тӗнђе курман ӗçсем тума пуçларӗç.

Пӗр хапрӑкпа тепри ӑмӑртса ӗçлесе ӗç пултаруллӑхне, ӳсӗмлӗхне хӑпартса, сотсиалисӑм тӑвас ӗçеваскатса пыраççӗ.

Мускаври калуш тӑвакан хапрӑкра ӗçлекен хӗрарӑмсем ӑмӑртӑва тӑрса кунне икçӗр калуш тӑвас вырӑнне виççӗр ытла тума пуçланӑ.

Çӗвӗ çӗлекен хапрӑкра кунне икӗ пађтто вырӑнне виççӗ туса пыраççӗ.

Нумай çӗрте хресђенсем те ӑмӑртуран пӑрӑнса йулмаççӗ. Вӗсем те хусканса кайнӑ. Вӗсем те ӑмӑрту ӗçне хутшӑнса пыраççӗ.

Ђӑваш хресђенӗсем те ӑмӑртӑва тапратса йађӗç. Анђах хађхи ӗçсем çинђе ђарӑнмалла мар. Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртӑва мӗн пур ђӑваш йалӗсене, колхоссене, ерттелсене, копперативсене тата ыттисене те хутшӑнтарса, вирлӗн ӗçлесе пымалла.

Йалпа йал, колхоспа колхос, ерттелпе ерттел, копперативпа копператтив ӑмӑртма тытӑнмалла. Амӑртса тумалли ӗçсем тем ђухлех: тырпул тухӑçлӑхне ӳстерессипе, нумай пусӑллӑ уйа куçасси, колхос туса ун ӗçне кирлӗ пек йӗркелесе йарасси, куђттурлӑ ӗçе вӑйлатасси тата ыттисем те. Ӑмӑртӑва хастарлӑн, пӑркаланмасӑр, пӗтӗм вӑйпа тарӑшса пурнӑçа кӳртсе пыни кирлӗ.

Комсомолӑн, йалти куђттурлӑ вӑйӑн массӑсем тӑвакан ӑмӑртӑва лайӑхрах хутшӑнса, ӑна орканисатсилеме пулӑшса, хӑйсем хушшинђи ӑмӑртӑва та вирлӗрех туса пымалла.

Партти ђленӗсен ӑмӑртӑва йертсе пырас ӗçе вӑйлатнипе пӗрле, хӑйсен те вӑл ӗçре массӑпа тӗвӗленсе ӗçлесе пырас пулай.

Малалла та кулака çул памасӑр, хӗстерсе пырса, хресђенсем ӗçлекенсен класӗпе тађӑрах çыхӑнса, сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртӑвра тӑрса, патша ђухнехи вӑхӑтран йулнӑ тырпул тухӑçлӑхӗн мӑшкӑллӑ хисепӗ урлӑ каçса кайса, йалхуçалӑхне çӗнетсе, машшинлатса сотсиалисӑм патнелле çирӗппӗн утӑпӑр.





1. Илим-Кора йалӗнђе ҫтена хаҫађӗ кӑлараҫҫӗ. 2. Ҫав йалтах сулӑм укҫипе вуламалли ҫурт тӑваҫҫӗ.

# СУЛӐ ҪИНЂИ ЙУРӐ.

Уйӑп Мишши.

Ак Атӑл, ҫут Атӑл выртат̆ ман умра.
Ав шӑппӑн шӑваҫҫӗ хуллен икӗ сулӑ.
Хӗвелӗ пытаннӑ, вӑрман ҫулӑмра.
Пӗр уҫҫӑн сывларӗ каҫхи симӗс улӑх.

Хуллен икӗ сулӑ шӑваҫҫӗ шыв тӑрӑх,
Йӑл-йӑл йӑлкӑшаҫ вуттисем инҫетре.
Ах, каҫӗ уйар-ҫке! Уйар та тӑп тӑрӑ,
Шӑп Атӑл ҫинђе ав пӗр йурӑ ђӗтрет...

Йурлат̆ ӑна Атӑл ҫынниййӗ вӑраххӑн,
Ђунне йӑпатасшӑн ҫав сулӑ ҫинђе.
Ех, уйӑх, хуралҫӑ каҫхи шӑп тӗнђен,
Ма тӗксӗм, киђем-им, сана та хӑраххӑн?..

Ҫак Атӑл хӗрне каҫ тухсассӑн вара еп,
Илтсессӗн вӗсен йанӑран йурrине,
Ӑҫтан-ха пӗр ним ас илмесӗр тӑрайӑп,
Ӑҫтан ас илместӗн пулса иртнине?..

Ах, Атӑл ес, Атӑл, ытла та пит анлӑ,
Хӑш ђух пуҫласассӑн хумсем авӑсма,
Кам ђунӗ, курсассӑн, сана хавас мар?
Анђах шыв вӑл ӑш куҫҫуљпе пӗр тӑванлӑ...

Пӑхайрӑм шур хӑйӑр ҫине сан урлах,
Мӗн ђул куҫҫуљпе ҫын йунне вӑл сӑхман-ши?
Мӗн кимӗсем туртнӑ, ахлатнӑ пурлак...
Камсемшӗн ахлатнӑ?.. Йун ӗмнӗ пуйаншӑн!.

Куҫа курӑғат̆ ав тискер пӗр хура ҫын,
Ђӗнет вӑл пур ђухӑнсене хӑй тавра...
Ку кам-ши, тесессӗн, еп калӑп: ку Раҫӗн,—
Хастарлӑ пӑлхавҫӑ. Палађ Мускавра

Унне пуҫне татнӑ пӗр ним хӗрхенмесӗр.
Ӑҫтан хӗрхенсе? Хӗрхенӳ вӑл ыйтман...
Пуҫне вӑл кастарнӑ пӗр нимӗн ђӗнмесӗр,
Ҫапла пуҫне хунӑ касак утаман.

«Пур пусмӑрти халӑх, ей тӑрӑр, вӑранӑр,
Харам пырсене пӗтерме малалла!..»
Тесе ун йӑхравӗ малтан йанӑранӑ
Ҫут Атӑл ҫинђе кӗрлесе тӑвӑлла.

Хастарлӑ пӑлхавҫӑ мӗнле пуҫне ҫинӗ,
Ҫавна асӑнса ав йурлат̆ Атӑл ҫынӗ.
Ҫавна асӑнса Атӑл хумӗ кӗрлет,
Ҫавна асӑнап вӗсемпе еп пӗрлех...



**ЙАНКАС Н.**

# Тăван уй-хир тăрăх.

1.

Ак каллех ман
Сас тĕвви
Сӳтĕлме тапранђĕ —
Ђĕремре
Уй-хир кĕвви
Шăнăçми капланђĕ.

2.

Кĕвĕлех,
Ђĕрем,
Çĕн сас,
Кĕвĕле тăваншăн.
Хăй хула,
Хăй йешĕл кас
Тăванах хађ маншăн.

Пайан епĕ
Уй-хире
Хурçă сас
Сапасшăн —
Ђеђенленнĕ кĕвĕрен
Пурă
Хурçăласшăн.

3.

Пит аван çав
Çĕр çине
„Поет" йат
Кӳмешкĕн —
Ахăр пурнăç
Ђерккине
Тавласа
Ĕçмешкĕн.

4.

Хăналарĕ тĕнђене
Çурăн
Кĕрекийĕ.

Тĕтреленђĕ куç умне
Сĕлĕ шерепийĕ...

Хуларан еп —
Ĕçлекен,
Уй-хире килетĕп...

Тен, пушах-тăр
Кĕреке
Маншăн
Уй-хирте те...

5.

Шăп çулталăк
Савăтра
Еп канми ĕçлерĕм —
Шурналра та
Хаçатра
Саспалли тĕрлерĕм.

Уй-хирпе еп
Хуларах
Хăш ђухне супаттăм —
Саспаллиллĕ алăрах
Тĕш пуђах
Кураттăм...

Хапрăк хĕрĕ
Кассăран
Сасспалли пухай-и —
Вăл йе
Йĕтĕн улăхра,
Йе çырла-мĕн
Шурлăхра
Татнăн туйăнай те...

Хир ађи еп,
Çавăнпа
Уй-хирпе супаттăм —
Моттор шавла
Пусăмпах
Хире ыталаттăм.

6.

Уй-хирпе
Хуллен утап.
Çанталăкĕ шăрăх.

Утнă май хам
Ывăтап
Кĕввĕме
Хир тăрăх.

„Ан ылхан мана,
Уй-хир,
Саншăн, тен, еп —
Таркăн...
Ђĕрçунтан еп

---

**И. ПАПЕЉ.**

# ТОЛКУШШОВ ВИЛĔМĔ.

Вăрçă тĕтрисем хула патнелле çывхараççĕ. Кăнтăрла пирĕн тĕлтен 4-мĕш тивиçи нађђађнĕкĕ Смышђайĕв—аслисене çилентернĕскер—хура пурккăпала вĕçтерсе иртсе карĕ. Смышђайĕв ыттисенђен уйрăм çапăçай, хăйне вађђи вилĕм шырай. Йуланутпа ђуптарнă çĕртенех вăл мана:

— Пирĕн çыхăну çулĕсене татнă, Ратçивиллăпа Протăна вут йарса илнĕ...—тесе кăшкăрђĕ.

Пурккăпала варкăшса çех пыраканскер—хăй пĕтĕмпех хуп-хура çав, куç-шăрђисем кăвар пек,—сиккипе ђуптарса карĕ.

Хăма йевĕрлех йака айлăмра прикатăсем йĕркеленейĕркелене тăраççĕ. Хĕвел хĕрлĕ йанкар тĕслĕ тусан ăшĕнђе шуса пырай. Аманнисем канавсенђе çырткаласа лараççĕ. Çестра милоçертисем курăк çинђе хуллен йурласа выртаççĕ. Афоњкка Питăн расветђĕкĕсем вилесем, салтак тумтирĕ таврашсем шыраса, уй тăрăх унтакунта ђуптарса çӳреççĕ. Афоњкка мањтан икĕ утăмран ђуптарса иртсе карĕ те, пуçне ман йенелле çавăрмасăр:

— Тăхăнтарђĕç пире. Ђăнах. Тивиçи нађђађнĕкĕ çинђен илтĕнкелет, ăна вырăнтан кăларасшăн. Вăрçакансем хушшинђе иккĕленеççĕ...—терĕ.

Пођаксем пирĕнтен пĕр виç çухрăмри вăрман патне пырса тăнă та, таçта, инçетре мар пулеметсем лартнă. Пуђăсем йăнăшса çухăра-çухăра илеççĕ. Вĕсем йăнăшни тӳсмелле мар вăйланса пырай. Пуђăсем çĕре перепере ӳкересшĕнех хăтланса, ытла васканипе çĕр ăшĕнђе ђĕтре-ђĕтре ђакаланаççĕ. Полккă командирĕ Выйăакайђенккă, хĕвел питтинђе харлаттарса çывраканскер, тĕлĕкре кăшкăрса йађĕ те, вăранса карĕ. Лаши çине утланса клавнăй ескатрон патне кайма тăђĕ. Канлĕ вырта çывăрман пирки пиђĕ хăйĕн луђăркаланса, хĕрлĕ-хĕрлĕ йăрăмланса ларнă, ќăсйисенђе тăп-тулли çливă.

— Вăт шăйттан,—терĕ те вăл çиленсе, çăварĕнђен çливă шăммисене сурса пăрахрĕ,— акă усал йапала. Тимошкă, кăлар флак.

— Кайатпăр-и?—тесе ыйтрĕ Тимошкă. Флак аврине йĕнер пускăђи ăшĕнђен туртса кăларђĕ те, флакне сарса йађĕ. Флакĕ çине çăлтăр ӳкерсе, III-мĕш Интернатсионал çинђен çырнă.

— Унта курăпăр,—терĕ Выйăакайђенккă; унтан сартăк: — Ей, хĕрсем, лашасем çине утланăр. Ескатроннăйсем, çынсене пухăр...—тесе тискеррĕн кăшкăрса йађĕ.

Трупађсем тревокă калаттарђĕç. Ескатронсем колоннă пулса тăђĕç. Канавран пĕр аманнăскер тухрĕ те, питне ывăç тупанĕпе картласа, Выйăакайђенккăна:

— Тарас Крикорйĕвĕђ, епĕ телекат, епĕр выртса йулатпăр пек куранай...—терĕ.

Ţӑн та ир
Хурҫӑланма тартӑм...“

7.

Йешӗл хирӗм
Ман кӗвве
Кисренсех итлерӗ...

Тӳпере
Йепре хӗвел
Йӑл-йӑлах йепрерӗ...

Хирти шухӑш
Пуҫӑмра
Тӗлкӗшсе ҫӳрерӗ.

Хурӑн ав
Ҫӳҫне шывра
Авӑнсах ţӳкерӗ.

Кӑтра ҫӳҫлӗ хурӑна
Ыталассӑм килţӗ...

Ылханмасӑр
Хир мана
Хӑй ţӗрҫине илţӗ.

Тавраллах ман,
Апӑршан,
Куҫӑмӑрсем ţупрӗҫ...

Ҫилӗ
Хӑмӑр ыраша
Ҫунаţӗпе ҫупрӗ.

Пӗрне-пӗри пуţахсем
Пырса ыталарӗҫ.
Тинӗс май
Кӑвак хумсем
Ţӳхенсе
Кашларӗҫ.

Ţӳхенет
Сӗткенлӗ хир
Симӗс тинӗс йевӗр.
Ман умра:
Ыраш,
Пӑрри,
Сӗлӗ,
Викка,
Клевӗр...

8.

Ой, ţӗрем!
Теме сисет —
Ташша йаţӗ кӑкӑр.

Ак ӑҫта
Пиҫет,
Ӳсет
Хурҫӑсемшӗн ҫӑкӑр!

Ак ӑҫта —
Тӑван ҫӗршыв!
Ак ӑҫта ун тумӗ!

Акӑ улӑх,
Кӗмӗл шыв
Выртнӑ вӗтлӗх ҫумӗн...

Хумсемпе
Тек кӗрешет
Шывра
Пӗţӗк сулӑ.
Пилӗк ҫуллӗш сӗрӗшет
Курӑкпала улӑх.

Ҫилпе
Хӑмӑр хӑмӑшсем
Шӗкӗлтетнӗ ҫемӗн
Ţӗвӗл-ţӗвӗл кайӑксем
Ианкӑсласҫӗ ҫемӗ...

Сывлӑш усӑ-ҫке утма
Вӗтлӗх,
Улӑх ҫийӗн.

Тин хӑйех тӑваť
Ҫӑтмах
Иешӗл хир
Ţӗрҫийӗ!

9.

Вӗтлӗх ҫумӗн,
Айлӑмпа
Ак кас сапаланнӑ.
Ик урамӗ
Хурӑнпа
Капӑр шупӑрланнӑ.

Сарӑ ţӑрӑш
Пӳрт-ҫуртсен
Улӑм ҫийӗ-пуҫӗ —
Тейӗн —

Ахӑр хӗрт-суртсен
Арпӑш
Ылтӑн ҫӳҫӗ...

10.

Акӑ ҫӗнӗ хапхаран
Кӗтӗм еп,
Утатӑп...

Шӑп тӗлпултӑм
Сахара:
— А-а...
Мӗнле пурнатӑн?..

Сахар
Хӗсӗк куҫсемпе
Мана хыт тӗллерӗ:
— Ниţţово-ха...
Мӗн ӗҫпе
Есӗр килнӗ?..— терӗ.

— Палламастӑн-им вара?
Кирилен еп —
Неҫтӗр... —
Терӗм епӗ
Сахара,
Хӑй мана пӗлмест те...

— А-а... Неҫук!
Ӑҫтан паллан —
Йӑлтах
Вырӑс майлӑ...
Ҫӑвайӑмарӑм-ха алла...—
Тесе тӑсрӗ алӑ.—

---

— Хӑтӑлса тухатӑр...—тесе мӑкӑртатса илţӗ те ВыťŤакайţенккӑ, лашине икӗ ура тӑрне тӑратрӗ.

— Пирӗн ҫапла шухӑш пур, Тарас Крикорйӗвӗţ: хӑтӑлса тухас ҫук епӗр,—терӗ ӑна аманнӑскерӗ хыҫалтан.

ВыťŤакайţенккӑ кайалла ҫаврӑнса пӑхса:

— Ан йӑнӑшса тӑр, пӑрахса хӑвармӑп!—терӗ те, лашасене тапратма камантӑ паţӗ.

Ҫавӑнтах ман йулташӑн, Афоңккӑ Питӑн, хӗрарӑм сасси пек сассийӗ макӑрнӑ манерлӗ йантраса карӗ:

— Тарас Крикорйӗвӗţ, вырӑнтанах йуртӑпа ан йар, лешсем патне ҫитиţţен пилӗк ҫухрӑм ţуптармалла,— пирӗн лашасем ӗшенсе ҫитнӗ, йепле вӑрҫӑн апла. Ҫаклатса илмелли тавраш ҫук унта—крушӑсем силлеме ӗлкӗрӗн...

— Уттипе! — тесе камантӑ паţӗ ВыťŤакайţенккӑ, куҫсене ҫӳлелле ҫӗклесе пӑхмасӑр.

Полккӑ кайса йаţӗ.

Афоңккӑ ман ҫумра ţарӑнса тӑрса шӑппӑн каларӗ:

— Тивиҫи наţţаӈнӗкӗ пирки мӗн шухӑшлани тӗрӗс пулсан, ӑна кӑлараҫҫӗ пулсан, вара пӗтрӗ ӗҫ пирӗн. Лашуна утлан та, вӗҫтер вара,—терӗ.

Унӑн куҫҫулӗсем йухса анţӗҫ. Епӗ калама ҫук тӗлӗнсе кайса, Афоңккӑ ҫине куҫсене ţарса пӑхса лартрӑм. Вӑл кӑстӑрţӑк пек ҫаврӑна-ҫаврӑна илţӗ, ҫӗлӗкне йарса тытрӗ, хӑркӑлтатса илţӗ, унтан и-их! тесе хыттӑн кӑшкӑрса йаţӗ те, вӗҫтерţӗ.

Кришţук куţţӗр хӑйӗн ухмахла таţţанккипе, тата епӗ—пӗţţенех выртса йултӑмӑр та, вӑрҫӑ вырӑнӗсем хушшинţе касţен аташса ҫӳрерӗмӗр. Тивиҫи штапӗ таҫта ҫӗтрӗ. Иут ţаҫсем пире йышӑнмаҫҫӗ. Поӈаксем Протӑна пырса кӗнӗ те, вӗсене унтан контр-аттаккӑ туса хӑваласа кӑларнӑ. Епӗр хула масарӗ патне пырса ҫитрӗмӗр. Виле тӑприсем хыҫӗнţен поӈаксен пӗţӗк отреţӗ сиксе тухрӗ те, винтовккӑсем тытса пире пеме тапратрӗ. Кришţук кайалла ҫаврӑнса карӗ. Унӑн таţţанкки тӑват тӑркӑсне те ҫухӑртса пыраť.

— Кришţук! — тесе ҫухӑртӑм епӗ пуţӑ шӑхӑрнӑ сасӑпа ҫил сасси виттӗр.

— Йури выӈамалла хӑтланаҫҫӗ,—терӗ вӑл мана хирӗҫ хурлӑхлӑ сасӑпа.

— Пӗтетпӗр,—тесе кӑшкӑрса йатӑм епӗ, хам вилессине курса.—Пӗтетпӗр, пиţţе!..

— Мӗн тума хӗрарӑмсем ӗҫлесе хӑтланаҫҫӗ-ши?— терӗ вӑл тата хурлӑхлӑрах,—мӗн тума хӗр ҫураҫнисем, венţетсем, мӗн тумашкӑн кумасем туйсенţе ӗҫсе савӑнаҫҫӗ-ши?..

Пӗлӗт ҫинţе шупка хӳре пекки йӑлтӑртатса илţӗ те, сӳнсе ларţӗ. Ҫӑлтӑрсем хушшинţе хур-кайӑк ҫулӗ палӑрса карӗ.

— Кулас килет манӑн,—терӗ хурлӑхлӑн Кришţук. Ҫул хӗрринţе ларакан ҫын ҫине пушшипе тӗллесе кӑтартрӗ,—кулас килет манӑн, мӗншӗн хӗрарӑмсем ӗҫлесе хӑтланаҫҫӗ-ши...—терӗ вӑл хӑйне хӑйех.

Ҫул хӗрринţе ларакан ҫын Толкушшов, телефонис

Хăйамат,
Кăçал аран
Кас
Комунă уçрĕ.
Икçĕр çирĕм йетокран
Çĕре йахăн куçрĕç...

Хаҫ
Килетĕп-ха унтан —
Вырăн пахаларăм...
Куçас шут пур
Хамăн та...
Хыт вăрçаĭ те
Арăм...

— Куçмалла,
Муҫи, ара,
Куçмаллах çав...—тетĕп.
Кăвакарнă Сахара
Комунах
Ĕрлетĕп.

11.

Тепĕр çын ак
Хапхаран
Кĕҫĕ,
Шур сухаллă.
Сăмах хушрĕ Сахара,
Ҫăмăртарĕ алă:

— Мĕн пуплет çак
Санпала
Ку „Сахар Сахарҫĕ“?..
Аҭа,

Ут-ха манпала —
Сăра сĕрнĕ
Карҫăк...
. . . . . . . . . . .

Ĕçкĕ мар хаҫ
Пуçăмра —
Хурçăланнă йашăн...

12.

Килленет ак
Ман умра
Вăйă,
Йурă,
Ташă...

«Ленин» йат ав
Йурăрах
Йарăнаĭ-çке меллĕн...
Аҫисем те,
Пăх, ара,—
Хĕрлĕ пĕсехеллĕ...

Мăкăҫ питлĕ хĕрĕсен
Тутисем
Ех, йĕрĕх!
Хĕрлĕ тутăр тĕрĕсем —
«КИМ»
Паллиллĕ тĕрĕ.

13.

Йашă-хĕр
Мана курсан:

„Несҭĕр килнĕ!“ терĕ.
Ахăр саслăн
Кăшкăрса
Мана кĕпĕрлерĕ...

— Нуккă,
Несҭĕр!
Ну, Йанкас!
Сăвăсем вула-ха!

Вуламах
Ĕрлерĕ сас,
Еп вулатăп акă...

Еп вулап
Уй-хир йурри.
Йашă-хĕр йепрерĕ.

Манпала пĕрлех
Тăрри
Тӳпере сĕрлерĕ...

Ман умра каллех
Уй-хир
Çимĕçпе сĕрешрĕ:

Сĕлĕ,
Виккă,
Клевĕр,
Вир
Тăп çилпе
Пуплешрĕ...

Ой, каллех
Ҫĕрем вĕрет —

Ташпа йаҫĕ
Какăр...

Ак ăçта вăл
Йешерет
Хурçăсемшĕн çăкăр!..

14.

Хаҫ уй-хирĕн
Йурăра
«Ленин»
Йат сĕрлет-и,
Самрăк хĕр те
Тутăра
«КИМ» тĕрпе
Тĕрлет-и,—

Ҫĕрем
Манăн та вара
Кăкăрах тулласшăн...
Уй-хир шавĕ
Сăвăра
Хурçă шав
Пуласшăн.

Ак çитес,
Пулас ыран
Кĕмĕшке уй-хирĕн
Тимĕрпе те
Хурçăран
Сĕрешĕ
Тумтирĕ.

Шупашкар — Мускав, 29 ç.

---

пулҫĕ. Урисене ăçталла кирлĕ йарса ларнă та, пире шăтарас пек пăхаĭ.

— Епĕ акă мĕн,— терĕ Толкушшов епĕр пырса çитсен,—епĕ вилетĕп. Тăнланатăр-и?

— Тăнланмалла,—терĕ Кришҫук, лашасене тăратса.

— Пĕр патрон маншăн пĕтерес пулаĭ,—терĕ Толкушшов çиллĕн.

Вăл йăвăç çумне сĕвĕнсе лараĭ. Уринҫи аттисем унăн пĕри кунталла, тепри унталла пăхаççĕ. Ман çинҫен куçĕсене илмесĕр, кĕпи аркине хуллен тавăрҫĕ. Хырăмĕ унăн татăлса тухнă, пыршисем ҫĕркуççисем çинелле шуса анаççĕ, ҫĕри тапни те палăраĭ.

— Шҫахтă килсе тухсан, мăшкăласа хăвараĭ. Акă токкумĕнт, аннене çырса йаратăн, йепле, мĕн пулнине...

— Çук. `Алă çĕкленмест,—терĕм епĕ хуллен кăна. Лашана ик шпорăпа тивертрĕм.

Толкушшов вара хăйĕн кăвакарса кайнă ывăç тупанĕсене çĕр çине сарса хуҫĕ те, вĕсем çине темле ĕненмесĕр пăхса илҫĕ.

— Таратăн,—тесе мăкăртатрĕ вăл, çĕр çинелле шуса анса,—тар, усал...

Пĕтĕм çанçурăм ăшăрхаса карĕ. Пулеметсем, кутăнлашнă пекех, ним ҭарусăр тата хытăрах шатăртаттараççĕ. Хĕвеланĕç хĕрелсе çуталса тăнă тĕлте пулеметсем йенелле Афоҫккă Питă сиктертсе пыраĭ.

— Пăртаккăн шăртлатпăр-ха,—тесе кăшкăрса йаҫĕ вăл хĕпĕртесе,— мĕнле йармăнккă унта сирĕн?..

Епĕ ăна Толкушшов çинелле кăтартрăм та, айăккалла пăрăнтăм. Вĕсем сахал калаçрĕç. Епĕ сăмахĕсене илтмерĕм. Толкушшов свотнăйа хăйĕн кĕнекине тыттарҫĕ. Афоҫккă кĕнекене атă кунҫи ăшне ҫикрĕ те, Толкушшова çăвартан пăшалпа тĕллесе пеҫĕ.

— Афоҫă,—терĕм епĕ, ирĕксĕрех темле кулнă пек пулса. Çак касак патне пытăм та: — епĕ вăт пултараймарăм...—терĕм.

— Кай!—терĕ вăл шуралса кайса,—вĕлеретĕп! Есĕр, куçлăхлăскерсем, пирĕн пеккисене, кушак шăшине шелленĕ пек шеллетĕр...— терĕ те, пăшал курокне туртрĕ.

Епĕ кайалла çаврăнса пăхмасăр лашана уттартăм. Çурăм ман сивĕпе вилĕме сиссе пыраĭ.

— Пăх-ха,—тесе кăшкăрса йаҫĕ хыçалта Кришҫук,— ан ухмахлан,—терĕ те Афоҫккăна алăран йарса тытрĕ.

— Ҫура йунĕ, ман аларан тарса хăтăлас çук вăл...— тесе кăшкăрҫĕ Афоҫккă.

Кришҫук мана çул пăраннă тĕлте хăваласа çитрĕ. Афоҫкки çук. Вăл урăх йенелле кайнă.

— Куратăн-и, Кришҫук, пайан епĕ хамăн ҫи лайăх йулташа Афоҫккăна çухатрăм,—терĕм.

Кришҫук таҫҫанккă ăшĕнҫен пĕрĕнсе кайна улма туртса кăларҫĕ.

— Çи,—терĕ вăл мана,—çи, тархасшăн.

Епĕ вара Кришҫукран, çак ахаҫ ретовой çынран, вăл хĕрхенсе панине илтĕм те, унăн улмине темле хурланса та, ырă кăмăлпа тулса çисе йатăм.

**Ф. Ишетер** куçарнă.



ЂĂВАШ КОМПОÇИТТĂРĔСЕМ
**Ç. М. Макçимăв, Ф. П. Павлăв,**
**В. П. Воропйов.**

# Ђăваш хорĕ Мускавпа Ђулхулара.

Ђăваш йуррисемпе, мусăкĕпе пирĕн Сойусăн тĕп хулине — Мускава паллаштарма пĕлтĕрех шухăш пурђĕ. Хатĕрсем çитейменнипе ку шухăша кăçала хăвартăмăр. Кăçал, çак шухăша пурнăçа кĕртес тесе, май уйăхĕнђе епĕ Мускавпа Ђулхуларан ђĕнӳсем илсе килтĕм. Пире Мускава Канăçупа Куђттура Паркĕ пĕр ерне йурлама, Ђулхулари Профсовет — Канавĕнпа Сормăвра икĕ контсерт тума ђĕнђĕç. Çутĕç Комиссариађĕ пулăшнипе хор контсерта кайас шухăш пурнăçа кĕме пултарђĕ вара.

Контсерта кайас умĕн Шупашкарта йатарласа ийунĕн 9-мĕшĕнђе 2-мĕш етнокрафи контсерђĕ турăмăр та, 13-мĕшĕнђе Мускава тухса кайрăмăр. Пирĕн труппăра мĕн пурĕ 42 çын пулђĕ: хорта 33 çын, 2 солист (пĕђђен йурлакансем — А. И. Токçинăпа, И. В. Ваççилйĕв), 1 çын ройађ калакан (Кађă Макçимăвă), 3 йалти мусăкçăсем, хорăн тиришорĕсем — Ф. П. Павлăвпа В. П. Воропйов тата епĕ. Мускавра труппă пит аван опшђешиттире — Советсен 1-мĕш çуртĕнђе — вырнаçрĕ.

Ийунĕн 16-мĕшĕнђен пуçласа 23-мĕшне çитиђђен хор 8 кун Паркра йурларĕ — шăматкунпа вырсарни кунсенђе Паркри пысăк театтăрта, ытти кунсенђе — пĕђĕк театтăрта. Мĕн пурĕ Паркра хор 12 контсертра йурларĕ. Кунсăр пуçне хор тата 3 çĕрте йурларĕ: ратио тарăх — 2 хут, Тĕп Аслă Театтăрта тата Мустрестра кăрмафон вађђи 10 пластинккă йурласа çыртарђĕ.

Ђăваш йуррисене Мускав пит хапăл туса итлерĕ. Малтан, пирĕн йурăсене илтиђђен, контсертсене йертсе пыракан мусăкçăсем епĕр аван йурласса питех шанман пулмалла. Вăл палăркалађђĕ. Йурласа кăтартсан, итлекен халăх пире хапăл тусан — Мускаври мусăкçăсем вара пирĕн çине урăх куçпа пăхма пуçларĕç, ђĕлхисем те вĕсен улшăнђĕç; вĕсем пире хăйсемпе тан çынсен шутне хуђĕç, пирĕн йурăсем илемпе сисрĕç, вĕсене аван, ăста йурланине курђĕç. Паркра йурласан пирĕнпе Украйнă хорĕн тиришорĕсем, урăх солистсем пирĕнпе паллашрĕç, пирĕн йурăсене хорпа тата пĕђђен йурлама нотсем ыйтакансем нумай пулђĕç.

Ђăваш хорĕ илемлĕ шурă кĕпесемпе тухса тăрсанах, контсертри халăх ала çупса илет. Йурлама çăмăл, ресонанс пит аван — илемлĕн йанрађ ђăваш йурри контсертсенђе. Пуринђен ытла кăмăла кайакан йурăсем çаксем пулђĕç: Ф. Павлăвăн — „Туй“, „Тӳттĕђ“, „Олту“; Ç. Макçимăвăн — «Ака-суха йурри», «Ан авăн шĕшкĕ», «Çăпата», «Мулкађ йурри»; В. Воропйовăн — «Килмен те курман», „Кай, кай, Ивана“. А. В. Токçинăпа И. В. Ваççилйĕв солă йурлаççĕ. Йурăсем хушшинђе ташă ăстисем — Овђинникăвă, Филиппăвă, Йемелйанăвă, Алекçейĕв — ђăваш ташшисене ташласа илеççĕ, мусăкçăсем ташă кĕввисем, йурăсем сăрнайпа, купăспа, кĕслепе пĕрле каласа параççĕ. Йурлакан йурăсене пурне те вырăсла куçарса, ăнлантарса паратпăр итлекен халăха.

Мускавра Тĕп Аслă Театтăрта йурлани пирĕншĕн пит пысăк ђыс пулђĕ. Епĕр унта ђаплă лару хыççăн пулнă контсертра йурларăмăр. Ку веђђăра ПСКП-йĕн Хĕрарăм пайĕ тата Çутĕç Комиссариађĕ ађасене пăхас поххот майĕпе тунă. Ларура Лунађђарски й-ш туклат тăврĕ. Контсертра пирĕн хор ђи малтан йурларĕ. Йурласса 4 йурă йурларăмăр: «Пиçнĕ пиçмен çырлашăн» — Тмитрийĕв карм., „Хĕр йĕррипе туй йурри“ — Лопађђов компоçиттăр (вăл хăйех ройађпе каларĕ контсертра), «Ака-суха йурри» — епĕ кармониленĕ, „Туй йурри“ — Павлăв кармониленĕ.

Контсертра аслă, ответлă çынсем пулђĕç — Сталин, Лунађђарски, Çвитерски йулташсем т. ыт. те. Тулли салă çын (2 000 ытла) пирĕн йурăсене тăнласа итлерĕ, йурлани вĕсен кăмăлне кайрĕ пулмалла. Пирĕн хыççăн Перçимфанс (Сойусри ђи ђаплă оркестăр) каларĕ, Аслă Театтăрăн ђаплă арттисĕсем тухса йурларĕç. Ун пек контсертра йурлани, тепĕр хут калатăп, ђăваш мусăкĕшĕн пысăк ђыс пулђĕ.

Кăрмафон вађђи хор 8 пластинккă йурласа пађĕ, çак йурăсене: 1. «Çăпата», 2. «Туй йурри», 3. «Çĕнĕ улăх йурри» тата „Кай, кай, Ивана“, 4. „Ака-суха йурри“, 5. „Шăнкăр кăна“ тата «Ан авăн шĕшкĕ», 6. «Килмен

те курман» тата „Ташă йурри“, 7. „Пиçнĕ пиçмен çырлашăн“, 8. «Мулкађ йурри». Токçинă «Кик-кик хуракĕш», Ваççилйĕв пĕр пластинккă çине икĕ йурă— „Çăлтăр виттĕр“ тата „Кăмиссарăн ађисем“ йурласа пађĕç.

Ђăваш йуррисене пластинккă çине çырма илиђђен вĕсене комиççире пăхса тухрĕç. Унта мусăк йенђен пăхакан експерт ђаплă композиттăр, халăх арттисĕ Ипполитăв-Иванов пулђĕ. Вăл пирĕн нотсене пăхса тухрĕ, хăшне йурласа та пăхрĕ те: „аван йурăсем, мусăк йенђен тĕрĕс çырнă вĕсене, çырма йурать, çырас пулать“, тесе Фетăр Павлăђпа мана савăнтарђĕ ку ђаплă композиттăр. Ипполитăв-Иванов калани ђăваш мусăкне çĕклет, пире те, ђăваш композиттăрĕсене, тĕрĕс çултан пăрăнса кайманнине кăтартать.

Çакăн пекех тепĕр паллă мусăкçă, ратиора мусăк ĕçне йертсе пыракан Ç. Пукославски хор çинђен „Иçвести“ре çырнă отсăвра ђăваш композиттăрĕсем хăйсен кармониленипе халăх йуррин илемне пăсманни çинђен çырать („Известия“ ЦИК СССР, 28—VI 1929 г. № 145). «Пăсман» тени пирĕншĕн мухтанинђен те паха йапала: кармонилесен халăх йурри пăсăлмасан, унăн илемĕ çухалмасть пулсан — епĕр тĕрĕс çул çинђе, малалла ĕçлеме те вара шанђăк пур.

Аслă Театтăрта 26-мĕшĕнђе йурласан тепĕр кунне Ђулхулана тухрăмăр. 28-мĕшĕнђе Канавĕнри Кулђттура çуртĕнђе йурларăмăр. Кунта та çалă пит пысăк — 1.700 çын кĕрет. Канавĕнри ĕçлекенсем, Ђулхулари ответлă вырăнта тăракансем (епĕр вытвишентсене курсран каларнă пирки тунă ђаплă лару хыççăн йурларăмăр) пирĕн йурăсене аван итлерĕç, хапăл турĕç. Тепĕр кунне Сормăвра 1-мĕш Май йатне панă пахђара 3 хут йурларăмăр. Малтан уçă стсенă çинђе контсерт патăмăр — çанталăк нађартарах пулсан та пире итлеме темĕн ђул халăх пуçтарăнђĕ. Контсерта итлеме Сормăвра ĕçлекен ђăвашсем, тутарçем те пыђĕç — вĕсен вăл кун пуху пулнă. Унтан кинора икĕ çеансра икĕ тулли çал çын пире итлерĕ. Шутласан, пирĕн йурăсене Канавĕнпа Сормăвра 4.500 халах илтрĕ. Контсертсем умĕн: Ђăваш респуплĕкĕ Ђулхула оплăçне кĕмелли çинђен, ђăваш халăхĕ малашне хăйĕн кулђттурĕне, хуçалăхне хăпартма Ђулхула пролеттариађĕпе пĕрле ĕçлеме шанни çинђен каларăмăр, йурăсене, Мускаври пекех, вырăсла куçарса ăнлантарса патăмăр.

Канавĕнри контсертра манпа „Нижегородская Коммуна“ хаçађĕн мусăк ретсенçеђĕ нумай каласрĕ. Вăл пĕлекен мусăкçă — Ленинкратри Конçерватторине пĕтернĕ çын. Ђăваш йуррине вăл пит йуратрĕ, пирĕн контсертшĕн хавас пулђĕ. Епĕр йурлани çинђен вăл Ђулхулари хаçатра ырласа икĕ номĕрте çырнă.

Йулашкинђен, прахутпа Ђулхуларан Шупашкара таврăннă ђух прахут çинђе 7 амерĕк çыннисем вађђи контсерт турăмăр. Ђăваш йурри вĕсен ђĕрисене те парăнтарђĕ, йурланăшăн пит хавас пулђĕç. Контсерт хыççăн амерĕк çыннисем сăмах каласа хора тав тăврĕç, асăнмаллăх Амерĕк флакне парнелерĕç. Контсерта итлеме пур I-мĕшпе II-мĕш класри çынсем, прахут команти пуçтарăнђĕ, йурланă хыççăн вырăссем те хăшĕпĕри пырса тав тăврĕç.

МУСКАВА КАЙСА КИЛНĔ ЂĂВАШ ХОРĔ.



Хор йурласа ҫӳренӗ ҫӗрте пӗр пысӑк ҫитменлӗх пулҫӗ — ҫӑваш хорне Мускав таврашӗнҫе ӗҫлесе пурнакан ҫӑваш рапоҫҫисене кӑтартаймарӑмӑр. Хӑш-хӑш хапрӑк-савӑт районӗсенҫе (Мытишҫӑра, Пушкинӑра) ҫӑвашсем нумай (пӗр тӗлте 500-ре йахӑн). Вӗсем ҫӑваш пурнӑҫӗнҫен татӑлса нумайтанпа пурнаҫҫӗ, ҫӑваш искусствине курмаҫҫӗ-илтмеҫҫӗ, вырӑс искусстви ӑнланма вӗсене йавӑртарах. Ҫавӑнпа Мускав таврашӗнҫи ҫӑвашсене ҫаваш йуррисене итлеме май тупса памалла пулнӑҫҫӗ. Епӗр хамӑр йенҫен ку ӗҫе тӑвас тесе нумай тӑрашрамӑр, анҫах Мускавра ответлӑ ҫӗрте (Ҫутӗҫ Комиссариатӗнҫе, „Ҫӑваш Хресҫенӗ“нҫе) ӗҫлекен ҫӑвашсем ку ӗҫ ҫине пӳрне виттӗр пӑхнипе ҫӗнӗ йурӑсене ҫӑваш рапоҫҫисене йурласа параймарӑмӑр. Ку хоршӗн пит кӳренмелле пулҫӗ.

Ҫапла иртрӗ пирӗн контсертсемпе кайса ҫӳрени. Мухтавӗ пулҫӗ хора, анҫах ӗҫлессе те нумай ӗҫлемелле пулҫӗ. Хаш-пӗр кун Мускавра кунне 3-4 хут йурлама тӗл килҫӗ. Пуринҫен ытла йӑвӑрри кӑрмафон валҫи йурланӑ ҫӗрте пулҫӗ — кунта 3 кун 4-шар, 5-шер сехет иртермелле пулҫӗ. Ҫапах хорта йурлакансем пӗртте ӳпкелемерӗҫ, ҫӑваш мусӑкшӗн хавассӑн тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ Ҫавӑншӑн вӗсене пысӑк тав.

Тиришорсем хӑйсен ӗҫне пӗлнипе хор йурлани технӗк тӗлӗшӗнҫен пит аван пулҫӗ — апла пулман пулсан ҫӑваш йурри йут ҫын ҫӗрине ҫул тупайман пулӗҫҫӗ. Пукославски хор ҫинҫен: „Это — отличный профессиональный хор, не потерявший в то же время свежести народного бытового исполнения“, тесе ҫырать. Респуплӗкӗн ҫӑваш хорӗ икӗ ҫул анҫах ӗҫлет, ҫапах та вӑл нумайтанпа ӗҫлекен паллӑ хорсемпе тан тӑма пултарать. Ҫавӑнпа ӗҫе малашне тата аванлатма шанҫӑк пур.

Хор таврӑннӑ вӑхӑтра Шупашкара Тӗпӗҫтӑвком ҫленӗсем ҫеҫҫийе килнӗ. Правиттӗлствӑ ыйтнипе ийулӗн 3-мӗшӗнҫе Хресҫен ҫуртӗнҫе хор йурӑсем йурласа паҫӗ, контсерт умӗн епӗ йепле ҫӳрени ҫинҫен каласа патӑм. Ҫеҫҫи ҫленӗсем те йурланине хапӑл турӗҫ, хора респуплӗк хорӗ шутне тӗплӗрех ҫирӗплетмелле тесе йышанҫӗҫ.

Ҫӑваш мусӑкӗн ҫулӗ уҫӑлать — контсертпа кайса килни ҫавна аван кӑтартрӗ. Мускавра пире малашне те ҫӗнмелли ҫинҫен сӑмахсем пулҫӗҫ. Тепӗр ҫулсенҫе контсертсемпе урӑх респуплӗксене, пысӑк хуласене кайма май пурри курӑнать. Анҫах унта ҫӳреҫҫен пирӗн **Ҫӑваш респуплӗкӗ тӑрӑх ҫӳресе ӳссе пыракан ҫӑваш мусӑкне ҫӑваш ӗҫхалӑхне итлеме памалла. Ку — пирӗн килес ҫулхи тӗп сатаҫӑ.**

**Ҫ. МАКҪИМӐВ.**

---

# ХИР САССИ.

**Н. Пиктемир.**

Хир, вӑрман, хӗвелӗ,— ҫак илемлӗх
Йапатса пире ҫитӗнтерет.
Ҫаврӑм йурӑ йурласа илмеллӗх
Ман ҫинҫе пайан ҫӗнӗ ҫерет.

Хирваскать: ырашӗ шӑркараҫҫӗ,
Вӗҫтереҫҫӗҫ шурӑ пӗлӗтсем.
Сисӗнмерӗ, васкасах саралҫӗ,
Ҫӑмӑртанҫӗҫ тулӑх пӗрҫисем.

Йал тапранҫӗ. Ҫурласем йурларӗҫ.
Вӑхӑта иртертӗм вырмара.
Ернерен вырман ана йулмарӗ,
Ҫӗмелсем те ларҫӗҫ сахал мар.

Ӗҫӗ хыҫҫӑн савӑк пушӑ вӑхӑт,
Каҫсерен хӗр-каҫҫӑ урамра.
Ваттисемшӗн, паллӑ, ҫапӑ ыйхӑ,
Епӗр пур пулатпӑр вӑйара.

Хӗвелпе кунсем ҫупсах кумаҫҫӗ,
Каҫ пулать... ҫитет те ир.
Пушӑ вӑхӑт ҫитесре курмасӑр
Пухува пуҫтарӑнтӑмӑр епир.

Ҫамрӑка — ҫыпҫуллӑ вашаватлӑх
Кускалать хастарлӑ йурӑра...
...Сӑввисем йухаҫҫӗ пит хӑватлӑ,
Уҫӑ сасӑ йанкӑшса тӑрать.

Ак, Петук — хисеплӗ комсомолӗҫ,
Ҫарӑнса пуҫларӗ сӑмаха:
Ҫӗнӗ ӗҫ тапратнӑ райкомолӗ,
Вӑл ан ирттӗр пирӗншӗн ахаҫ.
. . . . . . . . . . . . . .

Йал-хула пурнасшӑн алӑ-алӑн,
Савӑтра — шаккаҫҫӗ, хирте — акаҫ,
Ес ӑнлан: хӑватлӑ комсомолӑн
«Колхос» вӑл — пайанхи ахах.

Сӑмахсем ҫӗкленҫӗҫ, хавшакланҫӗҫ,
Йӗркерен тухмарӗҫ айакка.
«Малтанхи ыраш кӗлти» ҫапланҫӗ —
Вайланмашкӑн йал хисеп шаккать.

Тӑшмансем, ыйтатпӑр сирӗлмешкӗн!
Тек кӑшлаймӑр ирӗклӗ ӳте.
Пур ҫухне те, кӗр, сире ҫӗнмешкӗн
Епӗр пехилетпӗр „пӗр кӗлте!“

Хир, вӑрман, хӗвелӗ,— ҫак илемлӗх
Йапатса пире ҫитӗнтерет.
Ҫаврӑм йурӑ йурласа илмеллӗх
Ман ҫинҫеҫҫӗ, терӗм еп, ҫерет.



**Ана ҫинҫе...**

# ТЕОРИПЕ КРИТТĔККĂ

## Ђăваш проси çинђен.

### (Танилăвăн „Тилĕ хыççăн“ калавне тишкернĕ май).

Пирĕн просăра çитменлĕхсем нумай. Çавсем çинђен пĕрмайах сӳтсе-йавса, вĕсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшмалла.

„Çулăмри йал“ хыççăн, пысăкрах йапаласенђен епĕр Танилăвăн „Тилĕ хыççăн“ йатлă калавне вуларăмăр. Çак калав тăрăх, ăна тишкерес майăн, ђăваш просин çитменлĕхĕсене сăнаса тухасшăн еп ку статйара.

### Просăн сатађĕсем.

Проса епĕр йе çушетлă туса, йе пурнăçăн пĕр-пĕр йенне кăтартас тесе çыратпăр. Çушетли вулама интереслĕрех, çавăнпа çыракансем пурте çушетлă туса çырма тăрăшаççĕ. Анђах вырăс писаттĕлĕсем хушшинђе те çушетпа фапулăна лайăх уйăрса çитерейменнисем пур Çырнă ђух та вĕсем хушшинђи уйрăма лайăх палăртаймаççĕ, ђăвашсем хушшинђе ку питрех сисĕнет.

Фапулă йенђен кашни происветени урăхла пулаť, çушет йенђен нумайăшĕ пĕрпек пулма пултараççĕ. **Пирĕн ђăваш литтераттурĕ пуринђен малтан фапулă пама тăрăшаť.** Тĕлĕнмеллерех ĕçсем кăтартас, нумайрах çынсем вĕлерес, ĕçне майласа пырас. Çак ĕç ытла пысăк мĕлке пăрахса ытти кирлĕ, хаклă йапаласене тĕттĕмре тăратса хăвараť.

Çушет йенђен пĕрре: шуррисем — хĕрлисем. Шуррисем усал, хĕрлисем лайăх. Малтанах шуррисем çĕнтереççĕ, йулашкинђен хĕрлисем. Усалли лайăххипе кĕрешкине темиçе пин çул çак меттăтпа кăтартаççĕ.

Танилăвăн та çавах. Макçăм хĕрлĕ керой пулса тиллине килне илсе таврăнасси малтанах курăнса тăраť.

Çушет çитменлĕхне кăна Танилăвшăн пысăк çитменлĕх тесе хисеплемех йурамаст-ха. Ытти мĕнле? Çак çушета çĕнĕ шухăшсем, çĕнĕ майсем кӳртсе лайăхлатма пулаť. Танилăвăн пур-ши вăл?

Çĕпĕрте те ђăваш парттисанĕсем пулнине калав урлă пĕлтерес тенĕ пулсан — ку калав кирлĕ. Анђах илемлĕ литтераттурăн тĕп сатађĕсене савçемех манăçа хăвармалла мар. Каланинђен ытла кăтартас пулаť... Ĕçсем пулса иртни çинђен пĕлтернинђен ытла илемлĕ сăмахпа ђĕрене витермелле, сăмахĕ çара пулмалла мар, вăл танлаштарусем сăнлăхсем ťенђен пуйан пулмалла.

### Танилăв калаť-и, кăтартаť-и?

Ку калавра Танилăвăн хутошĕствăллă прийомсем çук. Тен, калавра кирлех те мар-тăр? Кирлĕ. Калавĕн йађех кирлĕпе кирлĕ маррине кăтартса параť. Макçăм тилĕ хыççăн кайса тилĕ кăна тытса килнĕ пулсан, калав йатĕнђе нимĕнех те çук тейĕттĕмĕр. Тилли мĕн-ха вăл? Пĕр йенђен вăл шур йур тăрăх çӳресе Макçăм капкăнне лекекен хура тилĕ; тепĕр йенђен вăл хура ĕмĕт хыççăн çӳресе парттисансен капкăнне лекекен шурă тилĕ. Калавĕн йатĕнђех пысăк сăнлах. Çавăнпа малалла вуланă ђух та çавна килĕшӳллĕ сăнсем кĕтетпĕр. Анђах вĕсем çук. Ытти çинђен автăр пĕтĕмпех хăй курнă йапалана каланă пек кăна каласа параť

Ăна тата кĕскерех те каласа пама пулаť вĕт: „Макçăм кайаť тилле, капкăна хура тилĕ лекнĕ, таврăннă ђух аташса кайаť те парттисансем тăракан йала пырса перĕнет. Отређĕн пуçлăхĕ ун йыснăшĕ (апла пулсан ма хуралта тăнăши-ха вăл? П.) пулнă. Ирхине йыснăшне вĕлереççĕ, Макçăм йыснăшĕшĕн таврăп тесе хăй те парттисан пулаť. Çуркунне тин хĕрлисем пырса çитсен килне таврăнаť“. „Тилĕ хыççăн“ йатлă калава вуласан пуçра та, ђĕрере те çакăнтан ытла нимĕнех те йулмаст.

Пире халĕ ку мар — ђĕнекен, вăратакан, вĕретекен сăпсем, сăмахсем кирлĕ.

Çаван йенђен пăхсан, Танилăв кунта кăтартас вырăнне каласа параť.

### Ăçта мĕн çитмест? Ăçта мĕн ытлашши?

Клава (сыпăк) пуçламăшĕсене çыракансем нумайăшĕ асăрхасшăн мар. Вулакан вĕсем пек мар, вăл тӳрех клавасен пуçламăшĕсене пăхса тухаť. Интереслĕ пек туйăнсан вулаť, çук-тăк — вуламаст. Вулакан вырăнне тăрса Танилăвăн калавне пăхса тухар-ха:

1-мĕшĕ—„Хĕлле. Çанталăк тӳсмелле мар уйар, сивĕ...“
2-мĕшĕ—„Çанталăк çав-çавах уйар, сивĕ...“
3-мĕшĕ—„Çĕр çав тери уйар та сивĕ...“
4-мĕшĕ—„Тӳсмелле мар сивĕ...“

„Тӳсмелле мар сивĕ“ тепи кăна темиçе хут каласан та пĕрре те ĕнентермест.

Калав сыпăкĕсене çакăн пек пуçлама пăрахмалла.

Çанталăка сăнласа пуçлани вăл хитре вырăна ӳкерсе илни кăна мар, çанталăка епĕр керойăн ĕçĕсемпе шухăшĕсене, йе килĕшӳллĕ, йе хирĕçӳллĕ кăтартатпăр Керой вилнĕ ђух хĕвел тĕнђене савăнтарса тухни, паллах,— вилекенĕн шухăшĕсем те çавăн пекех хăпарса тĕнђене çутатасса пĕлтерет. Çанталăк тем пек выђаса савăнса тăнă çĕрте керойĕ ййхăласа ларсан, мĕн пулĕ вара вăл? Çавăнпа сăнсем тунă ђух та, кирек мĕнле краскăсем сĕрме тытăнсан та, керойăн тĕп шухăшĕсене пĕрре те манма йурамаст

Малтанхи 3 клаван пуçламăшĕсем лăпкă. Унта ĕçĕсем те çавна майăн пыраççĕ, пит хыпаланмалли çук.

Тăваттăмĕш клавинђе вара „тăрă пĕлĕт çинђи çалтăрсем, хаљ çĕре персе анас пек, ђӳхенсе тăраççĕ“, тесе тăма вăхăт çук. Урамра шуррисемпе хĕрлисем çапăçаççĕ.. Макçăм ик кĕпçеллĕ пăшалĕпе ђупрĕ,— кам пăхмалла вал вăхăтра пĕлĕт çине, хăť пĕлĕђĕ те туллашаť пулсан йурĕђђĕ, вăл, мурçийеш, ђӳхенет кăна...

Писаттĕл — арттис, решиççор пулас пулаť. Пĕлĕтне хупла кирлĕ вăхăтра, уйăхна хăпарт, çилне вĕртер, йурна вĕçтер!

Çăлтăрсем ђӳхеннине спĕр савнипе куççене ĕç çукран çӳлелле йарса ларнă ђух кăна курма пултаратпăр.

Етеммисем пурăнмаççĕ. Вĕсене пурăнтарас тесен вĕсем мĕн шухăшланине, калаçнине кăтартмалла. Шуррисем хĕрлисене хăваланă ђух та, хĕрлисем çĕнтернĕ ђух та, вилнисене пытарнă ђух та, Макçăм килне таврăннă ђух та — кăмăл хусканмаст те.

### Автăрăн шухăшĕсемпе ун моттивĕсем.

Пĕђĕк калаврах пире Танилăв керойăн шухăшĕсем тĕпренех улшăннине кăтартаť. Вăл малтан тилĕçĕ кала, кайран — парттисансен пуçлăхĕ. Пирвайхи Макçăмпа кайранхи Макçăмăн хушшисем пысăк. Мĕн-ха вĕсене

пёрлештерекенни, çывхартаканни; мён-ха Макçăмăн шухăшёсене тёпренех улăштарса йараканни? Ак çакăнта просветенин тёп шăнăрё пулмалла. Çакăнта хутошнёк пётём вăйне, пёлўне хумалла.

Макçăма хёрўллё парттисан тăвакан моттив — йыснăшё, аппăшё, вёсен аҫисем — „саншăн, аппапа аҫисемщён тăшмансене тавăрса парăп...“ Йыснăшё те мён пурё „хёрлисем килсен мён калёç“, тесе кăна хăратрё. Аçтан пёлет Макçăм хёрлисем ҫăн-ҫăнах килессе? Аçтан вăл, тилё тирёпе хăйён тирёшён хăраса тăракан етем, хёрлисем килессе ёненме пултарать?

Йыснапа аппашăн револютси нумайах тăвайас çук.

Танилăвăн етеммисем куҫҫанма та савăнма та пёлмеççё

Вырăс просветенийёсенҫе ăшри пурнăçа кăтартни йулашки вăхăтра ытла та нумайлана пуçларё. Ҫăваш литтературё çинҫен ăна каламалли çук-ха. Пирён просветенисем протоккол йевёрлё. Керойсен ăшри пурнăçне курмалла та мар, сисмелле те мар.

Калавăн йулашки татăкёнҫе йалăн хёрлисем килес умёнхи пурнăçне кăтартнă. Кунта сахал сăмахпах нумайрах каласа хăвармаллаҫҫё. Темă хатёр — хёрлисем килес умён йал мёнле пурăнни паллах. Ҫухăнсем сас пара пуçлаççё. Кулаксем хăйсен ёçёсене майлама тытăнаççё...

Танилăвăн йалё нимёнех те шухăшламасть, никамран та хăрамасть, нимён те куҫҫанмасть. Кунта массăн ăшҫикне палăртма мар, ун тул йенҫи пурнăçне те кăтартайман.

Макçăм арăмё упăшкине ăсатрё те (тем сиссех ăсатрё, ан манăр)... лăпланҫё. Макçăм таврăнас тенё вăхăт иртсен, вăл мён шухăшпа пурăнни палăрмасть. Упăшки çухалнăшăн те куҫҫанать вăл, те савăнать. Темиçе уйăх хыпар илтмесёр пурăнсан та ҫёри хăнт та тумасть (çирёп те иккен çёпёр ҫăвашсен ҫёрисем!).

### Пурнăç васкатать, писаттёл илтет-и?

Ҫăваш хутошнёкёсен сатаҫёсем пысăк. Пёр йенҫен ҫăваш искусствине те пролеттари искусствин йёрне кўртсе, ăна хăвартрах аталантармалла; тепёр йенҫен пролеттари искусствин тёп принтсёпёсене манмасăр, хамăра майăн натсилле формăсем шăратса кăлармалла, пурнăç хыççăн ёлкёрсе пымалла.

Пирвайхи сатаҫа ёçе кўртнё ҫух пуринҫен малтан вырăс литтературине тишкерсе ун çитёнёвёсене сăнамалла, вёсем тăрăх хамăрăн çитменлёхсемпе кёрешмелле.

Иккёмёш сатаҫ йăвăртарах, вăл хамăр вăйран, творҫёствăн пуйанлăхёнҫен килет.

1. Ҫăваш халăхён пурнăçне кăтартнă ҫух вырăссен трафареҫёпе мар, ҫăвашсен пурнăçён тёсне кăтарт.

а) Ҫăваш çинҫен çырнă ҫух ун тёп ҫăваш йăлисене манмасăр, çав йăласем хаҫхи пурнăçра |кирлё маррине лайăх кăтарт.

у) Натсиллёхе палăртакан вак-тёвексене ан ман. Ҫăваша ёненмеллерех çыр (туй çинҫен çырнă ҫух кёçён кёрўн ашаккине ан ман, ҫăваш арăмён тумё çинҫен çырнă ҫух сурпан çаккине ан ман). Кашни сăмахра ҫăваш курăнса, паларса тăтăр.

2. Класлă тăшмана пёрре те ан ман, вăл çывăрмасть.

3. Вырăс сăнлăхёсем хыççăн каймасăр натси илемёпе пёркеннё сăнсем шыра Ҫăваш сăмахё вăйлă, илемлё. Ҫăваш халапне сăнаса ун пуйанлăхне çёнё майпа сăнласа ҫăваш ёççыннин ҫёрине витермелле туса пар.

4. Кашни ҫёлхен хăйён илемё пур. Пёр ҫёлхен илемне тепёр ҫёлхере палăртмалла мар. Çавăнпа тăван ҫёлхен илем тымарёсене шыраса туп. Вырăс сăмах çавăрнăш хыççăн куç хупса çўреҫҫен тăван сăмаха илсе ăна тёрлё май çавăркаласа пăх. Сăмаха вырăнлă лартни сăнлăха пуйанлатать.

5. Калаври ҫёлхене пёрмайах çăмăллатса пыма тăрăшмалла. Хаҫ шухăша вăрăма ҫасса йанине вырăссем те йышăнсах каймаççё. Ҫăваш ҫёлхи пушшех вăрăма йуратмасть. Кёскен, пёр-ик сăмахпах шухăша палăртни — ҫăваш ҫёлхине пёр йенҫен илемлёлетет, тепёр йенҫен вулаканшăн çăмăллатать.

6. Вырăссен кёнекисем тăрăхах просă технёккине вёрен.

Çўлерех асăннă çитменлёхсем Танилăва кăна тивеççё пулсан, кун пек сăмах хускатма та кирлех марҫҫё. Ҫăваш проси йапăх-ха пирён. Хăть мёнле калавра та çак асăннă çитменлёхсем лайăх палăраççё.

Çавăнпа ҫăваш илемлё литтературине тăвас сатаҫа пёр поеçи рамккине кăна кўртмелле мар,—илемлё, вăйлă просă тăвасшăн пётём вăйа хурса тăрăшма вăхăт çитнё.

**В. Паймен.**

---

# „Çёнё криттёк“.

## („Ҫăваш Хресҫенён“ 28 №, 1929 ç., çапăннă Шупуççынни статйи пирки).

Шупуççынни ҫăваш литтературёнҫе паллă вырăн йышăнса тăрать. Револютси вăхăтёнҫе паллă пултарусемех çырса парайман пулсан та, вăл реакси вăхăтёнҫе çырнисем ҫăвашсен патша вăхăтёнҫи сём тёттём пурнăçёнҫе каçхи хăйă çути пек мăкăлтатса тăраççё.

Анҫах криттёкре Шупуççыннине епёр халиҫҫен тёл пулманҫё. Ҫанах та çырма тата çав вăхăтрах криттёк пулма питё кансёр пулмалла: ăна епёр Шупуççынни В. И. Красновăн «Шуррисемпе çапăçни» çинҫен çырнă криттёкрен курма пултаратпăр.

Тёрёссипе каласан, кăна епёр криттёккă теме те пултараймастпăр, мёншён тесен криттёклекенни хăйён статйинҫе криттёккăн йёркине формă йенҫен те, ăшҫикё йенҫен те тыткалама пултараймасть.

* * *

Пурнинҫен те ытларах Шупуççынни Краснов кёнекине ăшҫик тёлёшёнҫен, урăхла каласан, итеолоки йенҫен тишкеререх парасшăн пулнă. Вăл хăйён криттёкёпе ак çапла каласшăн пулнă: В. И. Краснов „Шуррисемпе çапăçни“нҫе хăй краштăн вăрçинҫе пулнине анҫах кăтартасшăн. тёрёссипе каласан, хăйне мухтас шухăшпа çырнă тени пулать; вăрçăра çапăçнă массăн ҫапла ёçёсене кăтартса парайман, çав майпа унăн ирёксёрех „илемлетес майпа“ хăйёнҫен шухăшласа кăларса та çырмалла пулнă; пролеттари итеолокийё йенҫен те В. И. Красновăн кёнеки çителёк ё мар, унта вак пуршуйлă, хресҫен, итеолокийё вăйлă, тесе кăтартса парасшăн. Шупуççынни çакна кăтартса панă пулсан, вара халех „Шуррисемпе çапăçни“не ёçхалăхё хушшине сарма ҫармалла пулёҫҫё. Анҫах кăтартса памалла маррине нийепле те кăтартса парас çук. Мён тăвас? Шупуççынни умёнҫе çав В. И. Краснов кёнекине, пролеттари итеолокийё йенҫен темле лайăх пулсан та, лайăх мар тесе кăтартас шухăш çёмёрттерсе тăрать. „В. И. Краснов хăй çинҫен çырнипе ытти керойсене мансах кайать. Вăл хăйне шахтёр тесе, рапоҫи итеолокине çавăрса илнё пек кăтартасшăн пулин те, унăн хăш тёлте **хресҫен психхикё питё ăна пусса илет**, М.), ак илер 42 стр: «Елёк пёҫёк ҫух, мунҫа çумне хам лартнă ҫийе йăвăççи мёнле ўсние кайса курас килҫё». Ку ҫанах пулнă, кăна ёненмелле, мёншённе совпартшкултан тухни те ҫухлать“, тесе кулать

Пурте СУНТАЛА ҫырӑнса илӗр!

**СУНТАЛА** вулакан, есӗ шурнала сарас тӗлӗшпе мӗн тунӑ? Хӑвӑн йулташусене СУНТАЛ шурнала ҫыртарса илтерме тӑрӑшатни? Ху ҫырӑнса илтӗни СУНТАЛ? Кашни СУНТАЛ вулаканах ӑна ҫырӑнса илме тӑрӑштӑр!

**СУНТАЛ** хӑйӗн умӗнђе тӑракан сатађсене, ӑна мӗнпур малта пыракан ђӑваш ӗҫлекенсемпе хресђенсем тата ҫӗнӗ интеликентси пулӑшса пырсан анђах, пурнӑҫа кӗртсе пыма пултарат̆.

Ђӑваш ӗҫхалӑхне сотсиалисӑм тӑвас ӗҫе нумайран нумай хутшӑнтарса пырасси, ђӑвашсен сотсиалисӑмла куљттурине хӑпартасси, ӗҫҫыннисем хушшине ҫӗнӗ йӑла, пролеттарилле йулташлӑх кӗртесси, ђӑваш ӗҫхалӑхӗн кулленхи пурнӑҫне куљттурӑ сывлӑмӗ ҫаптарасси—ҫаксем пурте пирӗн умра тӑракан пысӑк сатађсем. Вӑл сатађсене ђӑваш ӗҫхалӑх пурнӑҫне ушкӑнпа сӑнаса пырса, ушкӑнпа тытӑнсан анђах тума пулат̆.

Пурте СУНТАЛА сарма тӑрӑшӑр!




Реtколлеки претҫетаттӗлӗ **А. И. СОЛӐТТӐВ.**

Ђленӗсем: **Иссайӗв М., Касакков К., Кириллӑв Н., Ваҫанкка Н.**

Ђӑвашаслӑлит 1881-мӗш №, 915-мӗш № саккас. Шупашкар, «Ђӑваш Кӗнеки» типпокрафийӗ. Тираш 1750.